24-17 3-11

№ КОМСОМОЛĔС КĔНЕКИ 4

Г. Зиновьев.

3-7

# МĔН ВĂЛ КОМСОМОЛ,

## УНĂН МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛА.

(1924-мĕш çулăн 30—IV Ленинкратра Р.Ç.Л.К.С. пухăвĕнђе тунă токлат).

ЂĂВАШ ОПЛĂÇĔНЂИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ.
Шупашкар 1924.

*Пĕтĕм тĕнтҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!*

Г. Зиновьев.

# МĔН ВĂЛ КОМСОМОЛ,

## УНĂН МĔНЛЕ ПУЛМАЛЛА.

(1924-мĕш ҫулăн 30—IV Ленинкратра Р.Ҫ.Л.К.С. пухăвĕнҫе тунă токлат).

ҪĂВАШ ОПЛĂҪĔНҪИ КĔНЕКЕ КĂЛАРАКАН УЙРĂМ.
Шупашкар 1924.

Чувашоблит № 40?.    Печ. 3.000 экз.

г. Чебоксары, Типография Чувашиздата.



Г. И. Зиновьев.

# Комсомолăн хаљхи ĕçĕсем.

## Орканисатсири ђленсем.

Йулташсем, сирĕн сойусăн хаљхи ĕçĕсем çинђен тĕпĕ йĕрĕпех каласа парас тесен, манăн кирлĕ материалсем çителĕклĕ çук. Пирĕн парттин Тĕп Комиттеђĕ хушнипе, епĕ, нумайах та пулмасť, пĕтĕм Расçейри çамрăксем хушшинђе ђи паллă ĕçлекенсен пухăвĕнђе (совешђанинђе) пултăм, унта епĕ халĕ сирĕн умра тăракач ĕçсене ђылай пĕлтĕм. Унсăр пуçне тата манăн Çамрăксен Комуниса Сойусĕ çинђен сўгсе йавса пирĕн парттин сиесĕнђе хатĕрленекен комиççире пулмалла пулђĕ. Çав сиесре çамрăксен ыйтăвĕ çинђен токлат тума Пуххарин йулташа хушнă. Унăн теçисĕсем çитес кунсенђех хаçат çине çапăнмалла. Вăл теçисĕсене епĕ вуласа тухрăм та, çавăнпа халĕ хăш ђихвăрсене, тата шухăшсене унăн теçисĕсенђен илсе калатăп.

## Мĕнши вăл хаљхи вăхăтра РÇЛКС-ĕ?

Кунта ђи малтан сойусăн йышĕ çинђен калаçмалла пулаť. Çамрăксен сойусĕн йышĕ хаљхи вăхăтра мĕн ђухлĕ пысăкши? Çакна тавăрса каламалли ђихвăрсем ман умра ђылай. 1922-мĕш çулти окťапĕр уйăхĕнђе, РÇЛКС-ĕн 5-мĕш сиесĕ умĕн, çамрăксен сойусĕнђе 247 пин ђлен шутланаťђĕ, вĕсенђен 26% ĕçлекенсем, 48% хресђенсем, 25% ыттисем.

РКП-ен 12-мӗш сиесӗ умӗн, 1923-мӗш ҫулта, ҫуркунне, сойусӑн ђленӗсем 285 пине ҫитнӗ, вӗсенђен 34% ӗҫлекенсем, 42% хресђенсем, 22% ыттисем, 1924 мӗш ҫулхи (кӑҫалхи) кӑрлађ уйӑхне ҫитнӗ ҫӗре сойус пит йышлӑланђӗ, унӑн ђленӗсем 406 пине ҫитрӗҫ, вӗсенђен: 40% ӗҫлекенсем, 40% хресђенсем, 20% ыттисем; йулашкинђен вара 1924-мӗш ҫулӑн пуш уйӑхӗнђе, сойусӑн ђленӗсем 472 пине ҫитрӗҫ (кунта Ленински присӑв кӗреймен пулмалла), вӗсенђен: 41,3% ӗҫлекенсем, 40,6% хресђенсем, 18,1% ыттисем. Ҫаксем паллӑ ђихвӑрсене сирӗн пурин те астуса йулмалла. Икӗ ҫул хушшинђе сойусӑн йышӗ икӗ хута йахӑн ӳснӗ. Сойус ђылай малалла кайнӑ, анђах ҫак кӑтартнӑ ђихвӑрсем сойус хӑйӗн ҫамрӑк тымарӗсене мӗн ђухлӗ йама кирлӗ таран, тарӑнрах йарайманнине пӗлтернӗ пек туйӑнаť. РҪЛКС ђленӗсем хађхи вӑхӑтра хуласенђе 200—300 пине ҫитеҫҫӗ, йалсенђе—190 пине ҫитеҫҫӗ.

Ҫак иккӗмӗш, йалти комсомолӗссен йышне кӑтартакан ђихвӑр—пит пӗђӗккӗ. Тем аслӑш сарӑлса выртакан Респуплӗксен Сойусӗн йалӗсемшӗн 190—200 пин ђлен—вӑл, тинӗсри шыв тумламӗ пек анђах. Ҫамрӑксен сойусӗн йышӗ ытла та пӗђӗккиве пирӗн лайӑхрах астуса йулмалла. Ђӑнах та РҪЛКС орканисатси йышлӑланаť. Ку—пит лайӑх. Анђах сойусӑн хӑй тунӑ ӗҫсем ҫине пӑхсассӑн, унӑн тунӑ ӗҫӗ малашнехи ӗҫӗн ҫӗр пайӗнђен пӗр пайӗ анђах пулса тӑраť. Пирӗн вӗҫӗхӗрри курӑнми патшалӑхӑн йалӗсенђе ҫамрӑксен комунисла сойусӗн ђленӗсем 200 пине йахӑн анђах пулни, вӑл—РҪЛКС-ӗн малашне тумалли ӗҫне сӑмсаланни анђах пулаť.

Епĕ тата пионерсен оркanисатсинҫи аҫасен йышĕ ҫинҫен пĕрик ҫихвăр кăтартса парам. Вĕсем халĕ тин хусканма пуҫланă. РҪЛКС-ĕн 5-мĕш сиесĕ умĕн вĕсем 10.000 аҫана ҫитеҫҫĕҫ, 1923-мĕш ҫулăн ийун уйăхĕнҫе—75 пин аҫа, ҫўк уйăхĕн 1-мĕш кунĕнҫе—100 пин аҫа, 1924-мĕш ҫулăн нарăс уйăхĕн 1-мĕш кунĕнҫе—122.000, ака уйăхĕн 1-мĕшĕнҫе 161.000 аҫа пулнă.

Вăл ĕҫе хускатса йама пит йăвăр пулнă. Пионерсем вăйлăлансах пырĕҫ, вĕсен ĕҫĕ ўснĕҫемĕн ўссех, сарăлсах пырĕ хуть. Анҫах респуплĕксен Сойусĕшĕн ҫав 161.000 пионер каллех тинĕсри шыв тумламĕ пек кăна курăнать.

Сирĕн сойусăн йышĕ ытла та пĕҫĕккĕ. Ҫамрăк ĕҫлекенсем хушшинелле сарăлма халĕ тин тытăнтăмăр, пуринҫен ытла хресҫен ҫамрăкĕсем хушшине сарăлма кайарах тытăнтăмăр. Епĕ кунта сойуса йышлăлантарнипе анҫах ĕҫе малалла йама пулать, теместĕп. Пуринҫен ытла пире мĕнле ĕҫлени паха. РҪЛКС-ĕ пурнăҫ ăшне, тĕттĕмре пурнакан ҫамрăксем хушшине кĕмелли ҫулсене халĕ анҫах уҫма пуҫларĕ, унăн малашнехи тĕп ĕҫĕ—йалтипе хулари ҫамрăксем хушшинҫи ĕҫе вăйлăлатса, ăна тĕрĕс ҫулпа илсе пырасси пулмалла.

## РҪЛКС-ĕ парттин «реҫерви» пулаҭи йе «инструмĕнҫĕ» (хатĕрĕ) пулать?

РҪЛКС-ăн пĕтĕм Раҫҫейри палăă ĕҫлекенĕсен совешҫанинҫе икĕ ушкăн йулташсем пĕр пĕринпе, РҪЛКС-ĕн мĕнле пулмалли, тата унăн парттине мĕнле ҫыхăнса тăмалли ҫинҫен пит хытă тавлашрĕҫ. Тавлашу ҫăнах та пит хĕрў пулҫĕ. Совешҫани умĕнҫе пит хĕрў

тискуҫҫи тăнă иккен. Кашни мĕнле калаңăха пĕр пĕринпе тавлашакансем йулташсем? Вĕсенҗен пĕр ушкăнĕ: РҪЛКС-ĕ вăл парттин реҫерви,—тенĕ. Иккĕмĕшĕ, малтанхисен йăнăшĕсене ҫийĕле кăларса,—РҪЛКС-ĕ вăл парттин реҫерви мар. партти аллинҗи хатĕр (инструмент), ҫав хатĕрпе партти хăйĕн ĕҫĕсене рапоҗҗисемпе хресҗенсем хушшине сарăт, тенĕ. Татах калатăп, тавлашусем ун җухне пит хĕрӳ пулҗĕҫ. Парттин Тĕпкомĕ ҫав тавлашусем ҫинҗен тĕплĕ пĕлесшĕн пулса, Тĕпком җленĕсен хушшинҗен ҫав совешҗанине пире йури йаҗĕ. Мĕншĕн тавлашнине лайăхрах пĕлес тесе, епĕр унта пĕр кун кунĕпе итлесе лартăмăр. Итлесе ларсан ларсан, епĕр хамăр та «ҫылăхлăскерсем», пăртак пуҫ тавра шухăшласа илтĕмĕр те *РҪЛКС-ĕ парттин реҫерви те, тата ҫав вăхăтрах унăн хатĕрĕ те пулма пултарать,* терĕмĕр. Ун ҫинҗен хĕрӳленсе тавлашмалли те ҫук. РҪЛКС-ĕ вăл—парттин реҫерви те, унăн аллинҗи хатĕрĕ те пулат; партти хăйĕн ĕҫĕсене массă хушшине РҪЛКС урлă сарăт. Парттин 12-мĕш сйесĕнҗе Сталин йулташ—РҪЛКС-ĕ вăл партти ĕҫне сарăлма ҫул уҫса паракан оркансатси, тенĕҗҗĕ. Совешҗанире ăна та асăнҗĕҫ. Вăл сăмахсем пĕрре те йăнăш мар. Җас җасах тата, РҪЛКС-ĕ вăл РКП валҗи рекрутсем хатĕрлекен шкул, теҫҫĕ, вăл та тĕрĕсех. Унтан тата Сойус прокраменҗе РҪЛКС-не комунисăм шкулĕ, тенĕ. Ку каллех тĕрĕсрен тĕрĕс.

Ман шухăшпа, РҪЛКС ҫинҗен ҫамрăксем пит татса каласшăн пулсан та, Ҫамрăксен Сойусĕ парттишĕн реҫервă, йе шкул, йе инструмент (хатĕр), йе ко-

мунисӑм шкулӗ пулмалла тесе тавлашмалли ҫук. Вӗсем вӑл та, ку та, виҫҫӗмӗшӗ те—пур те тӗрӗс. Ун ҫинҫен татса калаймanни пысӑк хуйӑх марха вӑл, ӑна калама пулӗ. Анҫах пирӗн сойусӑн хӑй тӑвакан ӗҫӗ пит наҫар, йерипен сарӑлса пырать. Кӑна пирӗн куҫа хупса мар, тӳрех каламалла; сойусӑн парттишӗн реҫерв йе инструмент пулмалла, тесе тавлашмалли ҫук, апла тавлашас вырӑнне РҪЛКС-ӑн ӗҫне сӑмахпа мар, ҫӑн ҫӑнах та вӑй илтерес, унӑн ҫамрӑк тымарӗсене тарӑнрах йарас тесе ӗҫлени нимӗнрен паха пулӗҫҫӗ. Совешҫавире тата рапоҫҫи ҫамрӑкӗсемпе хресҫен ҫамрӑкӗсем пӗр пӗринпе мӗнле ҫыхӑнса тӑмалли ҫинҫен, урӑхла каласан: епӗр йалта тумалли ӗҫӗсем ҫинҫен, пит хытӑ тавлашрӗҫ. Анҫах ку тавлашу, ман шухӑшпа, вырӑнсӑр тавлашу мар. Ку тавлашура РҪЛКС-ӑн паллӑ ӗҫлекенӗсем пӗр пӗринле тавлашни те мар. *Вӑл ӗҫ ытла йӑвӑрринҫен килет.*

## Йалти ӗҫе хӑйӗн картне кӗртмен.

РҪЛКС-ӗн паллӑ ӗҫлекенӗсенҫен хӑшӗсем йалти ӗҫ ҫине питех пӑхасшӑн мар, вӑл йапала ӗлӗк те палӑраҫҫӗ, халӗ те палӑрать, епӗ ӑна пытарса тӑмастӑп, тӳрех калатӑп. Йалти ӗҫшӗн питех хыпманни пирӗн Ленинкратри пек вӑйлӑ оркanисатсисенҫе те палӑра пуҫларӗ, епӗ ҫавӑнтан хӑратӑп. Пирӗн оркanисатси ҫи вӑйлӑ оркanисатсисенҫен пӗри пулать. Пӗтӗм Раҫҫейри ҫамрӑксем хушшинҫе ҫи паллӑ ӗҫлекенсен совешҫанинҫе акӑ мӗн палӑрҫӗ: ҫамрӑксем хушшинҫе ҫи паллӑ ӗҫлекенсем; Уралра та, Паккура та, Тонпасра та, пур ҫӗрте те пирӗн Ленинкрат оркanисатсип паттӑрӗсем. Пирӗн орка-

нисатси ҫи лайăх, ҫи ҫирĕп орканисатси, ăна тӳрех каламалла. Анҫах унăн ҫленĕсем пур те пролеттарисем пирки, пирĕн орканисатси йалта ĕҫлеме пит тĕплĕ пĕлеймест. Ҫак йапала вилнĕ Влатимир Илйиҫ сăмахĕсене аса илтерет. Вăл пĕрре, советсен Сйесĕнҫе хранҫуссен йумахне аса илсе,—етемĕн тивĕҫлĕхĕ хăш ҫухне ăна наҫарлатаҫ—тенĕҫҫĕ. Ҫак сăмахсем ҫынна анҫах мар, орканисатсисене те тивеҫҫĕ. Пирĕн орканисатсире нумайăшĕ хапрăк-савăтсенҫе ĕҫлекен ҫамрăксем, хапрăк, савăтсенҫе пиҫнĕскерсем. Ҫавăнпа та Ленинкрат орканисатсийĕн тивĕҫĕ пит пысăк, вăл ҫаплă вырăн йышăнса тăраҫ. Анҫах унăн тивĕҫлĕхĕ ҫас ҫасах ăна наҫар йенне сулăнтараҫ, мĕншĕн тесен, пирĕн орканисатси йал йенне питех пăхашăн мар, йалти ĕҫе кирлĕ, паллă ĕҫ вырăнне хумасҫ, унăн виҫине пĕлмест.

Сараттăв кĕпĕрнин орканисатсине илерха. Унăн йышĕнҫе пролеттарисем пирĕн ҫухлĕ ҫук, анҫах вăл хресҫен ҫамрăкĕсемпе хытăрах ҫыхăнса тăраҫ, мĕншĕн тесен, Сараттăв кĕпĕрни вăл—хресҫен кĕпĕрни. Унта парттин ҫленĕсем те, сойусăн ҫленĕсем те, хресҫен хушшинҫе тăвас ĕҫ пит кирлине пысăк вырăн йышăнса тăнине сисеҫҫĕ. Пирĕн кĕпĕрне—промышлĕнăҫлă кĕпĕрне, ҫавăнпа та пирĕн орканисатсире пролеттари нумай,—ҫавăншăн вăл пит малта пыраҫ. Вăл пит аван. Анҫах, миҫе каласан та, вăл, пролеттари нумай пирки ҫаплăланни, хăш ҫухне унăн наҫарлăхне кăтартаҫ, мĕншĕн тесен, РҪЛКС-ĕн йалта тăвас ĕҫне пирĕн орканисатси паллă, пысăк ĕҫ вырăнне хумасҫ. Йалти ĕҫ ҫине пирĕн орканисатси кăна ҫапла пăхаҫ пуласан, уншăн

хăрамаллийех ҫукҫӗ хуҫ, мӗншӗн тесен, пирӗн кӗпӗрне ре хресҫенсем нумайах мар. Анҫах, йулташсем, РҪЛКС-не йертсе пырас тӗлӗшпе Ленинкрат орканитасийӗ паллă вырăнта тăраҫ, тесе паҫăрах каларăм. Ҫавăнпа та пирӗн орканиса'си пӗрер пӗҫӗк йăнăш тусан, вăл пӗтӗм сойуса та пăсма пултараҫ. *Пирӗн, хутте мӗнле пулсан та, йал ҫине хытăрах пăхас пулаҫ, йалти ҫамрăксем хушшине шаларах кӗрес пулаҫ.* Епӗ сире РҪЛКС-ӗн йалги ҫіенӗсен пӗҫӗкки йышӗ калакан ҫыхвăрсене паҫăрах каласа патăм, вăл ҫихвăрсем РҪЛКС-ӗн йалти ӗҫӗ пит наҫаррине кăтартса тăраҫҫӗ. Ҫак йăнăшсем.—пурне те лайăх курăнса тăҫҫăр тесен, пирӗн хамăрăн малашнехи ӗҫсен ҫулӗсене тупса хурас пулаҫ.

## Ҫамрăксен комунисла сойусӗн йалти йышне ÿстермелле, ăна аслă ҫулпа йамалла.

Хăш ҫухне акă мӗн калаҫҫӗ: партти хăйӗн ҫулне ӗҫлекенсен йенелле тытаҫ. Ленин вилнӗ хыҫҫăн парттийе кӗнисем (Ленински присăв) пур те хапрăк-савăтсенҫе ӗҫлекенсем, теҫҫӗ. Вăл ҫăн, РКП-не епӗр ӗҫлекенсене нумайрах кӗртесшӗн тăрăшатпăр. РКП ӗҫлекенсен парттийӗ кăна, ӗҫлекенсемпе хресҫенсен пӗрле парттийӗ мар, тетпӗр епӗр. *РКП вăл ӗҫлекенсен класăн парттийӗ, хресҫенсене хăй хыҫҫăн йертсе пыракан партти.* Ҫак сăмахсем тăрăх хăшӗсем акă мӗнле тăвасшăн. Вӗсен шухăшӗпе, РҪЛКС-ӗн хутте хăҫан та РКП пекпулмалла, унăн ÿкерҫекӗ пулса ҫамрăк ӗҫлекенсен, про-

леттарисен хушшинҫе анҫах ӳсмелле пулаӗ вара. Ман шухӑшпа ҫапла калани тӗрӗс мар пек туйӑнаӗ. Ҫапла шухӑшлани РҪЛКС-ӗн ӗҫне наҫарлатас тени, ӑна пысӑк ӗҫ вырӑнне хуманни пулаӗ. Пухharин йулташ, парттин Тӗпкомӗнҫе ӗҫлекен ытти йулташсемпе килӗшсе, хӑйӗн теҫисӗсенҫе пит тӗрӗс сӑмахсем ҫырнӑ: Епӗр орканисатсийе тума мӗн ҫухлӗ айалтан пуҫлатпӑр, ҫавӑн ҫухлӗ унӑн хӑйӗн йышне хулари пролеттарисене кӑна мар, йалти хресҫен ҫамрӑкӗсене те нумай илес пулаӗ. РҪЛКС ӗн хӑйӗн орканисатсине хапрӑк - савӑтра ӗҫлекенсемсӗр пуҫне, ытти ҫӑмрӑксене хӑйуллӑрах илес пулаӗ, вӗсене РКП хӑйуллӑрах илме пултарайманнине пӑхма йурамасӗ. РҪЛКС-нҫен те айаларах анса пионерсем ҫинҫен калаҫас тесен, вӗсен рапоҫҫи мар ҫамрӑк аҫасене хӑйсен хушшине тата хӑйуллӑрах илмелле.

Мӗншӗн аплаши? Кунта епӗр пионерсен орканисатсин ӗҫӗсене кайа хурас теместпӗр. Ҫавӑнпа та пионерсен орканисатси ҫинҫен пӗр-ик сӑмах калам. Епӗр кунта ҫамрӑк аҫасене, октӑпӗр револютсийӗ хыҫҫӑн ҫуралнӑскерсене ҫавӑрса илетпӗр. Епӗр ҫӗне сыпӑк тӑвасшӑн; вӑл сыпӑка пирӗн лайӑх пӑхса ӳстерсе, комсомол орканисатсинҫе тытса, вӗсенҫен комуниссем тӑвас пулаӗ. Комунисӑма комуниссен вӑйӗпе анҫах тума хӑтланни, вӑл аҫа вӑййи анҫах пулӗҫҫӗ. Ҫак сӑмахсене В. И. темиҫе хут та каланӑ. Пирӗн-комуниссен комунисӑм тӑвас ӗҫе пуҫласа пыракансем пулас пулаӗ, анҫах акӑ ҫакна манас пулмасӗ: комунисӑм патне ҫитес тесен, пирӗн ҫӗнӗ ӑрува пӗтӗмпех комунисӑм сывлӑшӗпе сывлаттарас пулаӗ. Ҫавӑнпа епӗр ҫак хаҫхи пионер-

сен наҫар орканисатсине пётём ҫамрăк аҫасене, пролеттарисенне те, хресҫенсенне те ҫавăрса илсе кёртесшён тăрăшатпăр.

Тепёр картлашка ҫўлерех хăпарсассăн РҪЛКС патне ҫитетпёр. РҪЛКС-ён хăй хушшине хресҫен аҫисене хăйуллăрах илес пулаť, РКП пек ҫарăнса тăмалла мар, мёншён тесен, РҪЛКС вăл ҫамрăксене, октьабр револютси вăхăтёнҫе 10-11 ҫулсенҫе кăна пулнăскерсене илет. Вёсем халё 17-18 ҫула ҫитнё. Пионерсемне комсомол орканисатсисене рекрутсене хатёрлекен шкул теме пулаť. Хресҫенсене парттийе илмешкён халё вёсем малтан темиҫе ала виттёр; пёрре пионерсен, тепре комсомоллёссен орканисатсийёсем виттёр тухас пулаť.

Пётём Раҫҫейри ҫамрăксем хушшинҫе ёҫлекенсен совешҫанинҫе хăш хăш йулташсем акă мён каланăҫҫё: —РҪЛКС-не епёр хресҫенсене хăйуллă илсен, вăл вара вёсене парттийе кёме аслă ҫул уҫса панийех пулаť, мёншён тесен, РҪЛКС-нҫен парттийе кёме тўптўрё ҫул кайаť тенёҫҫё. Ҫапла калани тёрёсех мар. Тёрлёрен ҫырма, шывёсем пёр мăн кўлле йухса кёрсе мёнле пысăк шыв пулса кайаҫҫё, ҫавăн пекех ҫамрăксен союсён те; хăйён орканисатсине хресҫенсемпе ёҫлекенсем ҫамрăкёсене хăйуллăрах илес пулаť те, комуниссен парттишён ҫынсем хатёрлекен вырăн пулас пулаť. Вёсем парттийе кёриҫҫен, РКП хăйён йышне шанҫăклă ҫынсене илес тёлёшпе вунă тёрлё май та тупё, вёсене темиҫе ала виттёр те кăларё. Хресҫен хушшинҫи ҫамрăксен тата ваттисен йăлисемпе йёркисене, шухăщёсене пёлни пит кирлё. Илер револютсиллё 7 ҫул хушшинҫе

ӳсиĕ çамрăксене—çĕпĕ сыпăка, унтан вĕсемпе патша вăхăтĕнҫе ӳсиĕ старниксене (кивĕ, сыпăка) тапаштарса пăхар та, вĕсем тĕрлĕ шухăшлине, шухăш тĕлĕшпе пĕр пĕрингҫен пит инçене уйăрăлса тăни палăрсах тăрать. Ăна кашнийех пĕлет.

*Çавăнпа, темиçе каласан та РÇЛКС-ĕн хăйĕн оркаписатсине çамрăк хрестҫенсене РКП пек мар, хăйулăрах, ирĕкрех илес пулать.* Пионерсен оркаписатсин —РÇЛКС-не пулăшакап оркăпăн хăйĕн йышне пролетарирен тухман çынсене РÇЛКС-ран та хăйулăрах илес пулать. Унтан вара епĕр РÇЛКС-ĕн ҫленĕсене партийе илеҫҫен малтан вунă хут тĕрĕслесе тухăпăр, вара тин партийе кĕме хăшĕ тивĕçлине, тивĕçлĕ маррине пĕлĕпĕр те, тивĕçлисене партийе те илĕпĕр.

Пирĕн умра çамрăк сыпăка (ăрува) çĕнĕ пурнăç майĕпе вĕрентсе ӳстерес ĕç тăрать. Вăл ĕç пит пысăк.

## „Классăвиксемпе массăвиксем".

Çав пысăк ĕçсемпе пĕрле епĕ сире çамрăксен союсĕнҫи ĕлĕкхи тавлашăва аса илтерес тетĕп. Вăл тавлашу ҫи малтан Украйнăра пуçланса кайрĕ. Вăл—„классăвиксем" „массăвиксемпе" тавлашни. Классăвиксем ун ҫухне мăн кăмăлланса акă мĕн калаҫнăҫҫĕ: епĕр рапоҫҫи класшăн тăрăшатпăр, епĕр—ĕçлекенсен класăн пайĕ, епĕр ĕçлекенсен класĕ çулĕнҫен пăрăнса урăх çулпа каймас çук, епĕр хамăр йыша нумайлатасшăн хыпаланмастпăр, çирĕплетесшăн тăрăшатпăр, теҫҫĕç. „Массăвиксем" мăнкăмăлланас йенҫен кусене парăнмасăр акă мĕн каланă: епĕр—массăн оркаписатсийĕ, епĕр хресҫенсем хуш-

шине шаларан шаларах кӗрсе, вӗсене хамӑр хушӑмӑра нумайрах илсе оркамисатсилесшӗн, тенӗҫҫӗ.

Ҫавӑн пирки вӑра ҫак икӗ ушкӑнча „классӑвиксемпе массӑвиксем“ тесе кала пуҫларӗҫ. Вӑл тавлашу сийен нумай тумарӗ, ҫасах пӗтрӗ хуть. Пирӗнтен: есӗр хӑш ушкӑн майлӑ, „классӑвиксем“ майлӑн, йе „массӑвиксем“ майлӗ—тесе ыйтсассӑн, епӗ калӑттӑм: мӗншӗн вӗсенҫен пӗрне анҫах йышӑнмалла, мӗншӗн пролетгарисем йертсе пыракан массӑн оркамисатсийӗ темелле мар, теме пултарӑттӑм. Ку сӑмахсене епӗ ҫав икӗ ушкӑна пӗр пӗрне ӑнланмасӑрах ҫураҫтараспӑн пулса калас ҫук. Ҫамрӑксем вӗсем татса каласа панине йуратаҫҫӗ, хӑйсемпе ни ӑпшӑн ни спввӗн калаҫакансене кураймаҫҫӗ. Анҫах клас йертсе пыракан массӑ оркамисатси тени—ӑнланмалла йапала, ку сӑмахсем тӗрӗс. Пире нумай ҫынлӑ сойус, парттирен те пысӑкрах сойус кирлӗ. РҪЛКС патшалӑха хӑйех тытса тӑмасть, РКП патшалӑха тытса тӑракан партти. РКП-и оркамисатси тӗлӗшне пит таса, пӗр тӗрлӗ пулмалла. РҪЛКС вӑл партти оркамисатсийӗ мар. Вӑл оркамисатси партти оркамисатсинҫен пушӑрах, ӑна ирӗк те ытларах панӑ, ӑна мӗншӗн те пулин кирлӗрен ҫапла тунӑ ӗнтӗ. Мӗншӗн епӗр ӑна ҫамрӑксене оркамисатсилекен район пайӗ, парттин Кӗпӗрнери комиттеҫӗн комунисла сойус комиҫҫийӗ тесе каламан? РҪЛКС-ӗ вӑл пӗтӗм Раҫҫейри уйрӑм оркамисатси, унӑн Тӗпком та Кӗпкомсемпе Укомсем те хӑйӗн пур, спессене вӑл хӑй тӑвать. Епӗр вӑл оркамисатсийе, хӑйӗн ҫамрӑк тымарӗсен хресҫен хушшине шаларах йагӑр тесе, ытла ҫӑмӑртанса ан тӑтӑр тесе,—ирӗк те

пысăкрах патăмăр РÇЛКС-нҫе рапоҫҫи мар çынсем РКП-ринҫен нумайрах пулмалла. Çав шутпа епĕр—массă оркакисатсийĕ. Анҫах РÇЛКС-ăн оркакисатсинҫе пит çирĕп ушкăн пулмалла, урăхла каласан оркакисатсин варри нихăçан та çĕрсе пăсăлмалла мар. Апла пулсан, мĕнле çынсем пулмалла ун варринҫе тесе ыйтсан, епĕр калатпăр: рапоҫҫисем, пролеттарисем пулмалла тетпĕр. Çапла вара массăллă оркакисатсин варринҫе пролеттарисем пулаççĕ, йе тата тепĕр тĕрлĕ каласан, вăл массăллă, нумай хресҫенлĕ оркакисатси, пролеттари çамрăкĕсем йертсе пыракан оркакисатси, тени пулаť. Çапла ĕнтĕ пирĕн Çамрăксен Сойусĕн Массăлă Сойус пулмалла, унăн йышĕнҫе хресҫенсем нумай пулмалла, унăн тĕрекĕ—хулари çамрăк пролеттарисен пулмалла, пĕтĕм сойуса упраса тăракан, тĕрĕс çулпа илсе пыраканĕ—РКП.

Прохсойуссем çинҫен тавлашнă ҫухне, Ленин йулташ вĕсене: пролеттарисен тиктаттурине тытса тăма пулăшаканӧсем терĕ. Патшалăха тытса тăракан пролеттарисен тиктаттурине çирĕплетес тесен, тĕрлĕ йĕнҫен çиçтемлă тĕрексем кирлĕ. Ҫи мăн тĕрекĕ—партти, ăна ваҫҫи тата тĕрексем кирлĕ.

Прохсойуссем—ҫи кирлĕ тĕреклĕх, ун çинҫен Ленин йулташ каланă. РÇЛКС, прохсойуссем пекех, партти оркакисатсийĕ мар пулин те, епĕр ăна хытă тĕреклĕх шутĕнҫе теме пултаратпăр. Анҫах унăн партти пек пулмалла мар, партти сăнне тӳрех хăй çине илмелле мар. Унăн тĕп ĕçĕ партти кăтартнă çулпах пымалла, анҫах оркакисатсилес ĕç, тата ĕçлемелли тĕрлĕ майсем хăйĕн пулма пултараççĕ. Вĕсем урăхларах та пулма

кирлӗ, мӗншӗн тесен, РҪЛКС-е ҫамрӑксем хушшинҫе кӑна ӗҫлет. Ҫакӑнтан ӗнтӗ ӑраснаӑхсем тухса кайаҫҫӗ, ҫакӑнтан РҪЛКС-ӗн сӑнӗ палӑрать. РКП сӑнне ӳкерсе илсе ун тӗслӗ пулма йурамасть. Ҫакна есӗр ӑнлантӑр пулсан, РҪЛКС-ӗн хресҫеи хушшинҫи ӗҫӗ те парттин пек мар, урӑхла пулмаллине ӑнланмалла, хулари пролеттариат халӗ 5-6 мӗлйунран ытлах мар пулӗ, вӗсенҫен патшалӑх хапрӑк-савӑҫӗсенҫе ӗҫлекенсем пӗр мӗлйун ҫурӑ анҫах; хресҫенсем сахалтан та 80 мӗлйуна ҫитеҫҫӗ. Револутси вӑхӑтӗнҫе пролеттариата пуҫлӑх тӑвас тӗлӗшпе, хресҫенсене йертсе пырас тӗлӗшпе пирӗн партти хӑйӗн йышӗ тӑрӑх пролеттарисен парттийех. Анҫах епӗр хресҫенсемпе пӗрлешмен пулсан, влаҫе пӗр кун та тытӑнса тӑраймӑттӑмӑр.

Ӗҫлекенсемпе хресҫен пӗрлешни—Ленинисӑм никӗсӗ пулать. Мӗнле пулать ҫав пӗрлешӳ? тӗрлӗ пулать. Пӗр вӑхӑтра вӑл пӗрлешӳ Хӗрлӗ ҫар урлӑ пулса пыҫӗ. Халӗ вӑл копператсипе, тата ытти тӗрлӗрен органисатсисем урлӑ пулса пырӗ. Вӑл пӗрлешӳве ҫирӗплетме РҪЛКС-ӗ те ҫылай пулӑшать. Нумай вулӑссенҫе РКП йаҫҫейккисем ҫук, РҪЛКС-ӗн йаҫҫейккисем пур вулӑсенҫе те, сахалтан, та пӗрер пур. РҪЛКС ӑн йалти ҫленӗсем 190 пине ҫитеҫҫӗ, РКП ҫленӗсем 50 60 пинтен те иртеймеҫҫӗ. Мускав ҫывӑхӗнҫи хӑш хӑш вулӑсенҫе РҪЛКС-ӑн йаҫҫейккисем вуншар та пур, РКП йаҫҫейккисем пӗрре те ҫук.

РҪЛКС парттийе пулӑшать, вӑл хресҫенсемпе пӗрлештерсе, ҫыхса тӑрать, ун пирки нимӗнле тавлашу та пулма кирлӗ мар. Пире пролеттари ҫамрӑкӗсемпе ан-

ҫах пӗрлешни кирлӗ мар, вӗсемпе анҫах пӗрлешесси йавӑр ӗҫ мар, мӗншӗн тесен, партти пролеттари ҫамрӑкӗсемпе хӑйех. РҪЛКС-сӗр пуҫнех, ҫыхланма пулӗҫӗ. РҪЛКС-ӗ парттийе пулӑшать, вӑл ӗҫлекенсемпе хресҫенсем хушшинҫи пӗрлешӳве, та а ытларах вӑйлӑлантарать. Пирӗн ҫав пӗрлешӳве 80 мӗлйун хресҫене хутшӑнтарас пулать, мӗншӗн тесен, пирӗн нумай хресҫенлӗ патшалӑха сотсиалисӑм йӗрки кӗртмелле. Ҫавӑнпа ҫӗнӗ пурнӑҫ сывлӑшӗпе сывласа ӳснӗ ӑру кирлӗ. РҪЛКС-ӗ пирӗншӗн тата ытларах кирлӗ орканисатси пулать, мӗншӗн тесен, епӗр ун урлӑ ҫамрӑк ҫивӗҫ хресҫенсемпе пӗрлешме пултаратпӑр. Ҫак сӑмахсем РҪЛКС-ӗнҫе ӗҫлекенсен йашҫӗкне лайӑх кӗрсе вырӑнаҫмалла.

## Ҫӑн пролеттари револҫутсионерӗн мӗнле пулмалла?

Пирӗн,—епӗр таса пролеттари,—тесе мухтанмалли ҫук. Епӗр сире ҫавӑншӑн йурататпӑр та. РҪЛКС-ӗн йаникӗсӗ—пролеттари ҫамрӑкӗсем пулма кирлӗ, ҫак йапала комунисӑм аспукки пулать. Йр тӑрсан та, каҫ ҫывӑрма выртнӑ ҫух та „мухтав турра“ епӗ ҫӑн пролеттари револҫутсионерӗ, тесе калакан ҫын вӑл ҫӑн пролеттари револҫутсионерӗ мар, ҫӑн пролеттари револҫутсионер хӑй пек пролеттарисен хушшинҫе ӗҫленисӗр пуҫне, тата вӑл хӑй хыҫҫӑн хресҫенсене мӗлйунӗ мӗлйунӗпе йертсе пырать, малашне те пӗрмайах йертсе пырӗ. Ҫак сӑмахсене епӗр В. И. хыҫҫӑн пӗрре анҫах мар, темиҫе хут та каланӑ.

Пирĕн ĕçлекенсем, епĕр пролеттари, тесе мăнкă-мăлланса анђах тăнă пулсан, вĕсем хресђенсене хăй-сем хыççăн йертсе пырайас çукђĕ, вĕсене кам та пу-лин ыттисем йертсе илсе кайма та пултарăђђĕç. Анђах пролеттарипе унăн парттийĕ хăйсем хыççăн ĕçлекенсе-не çеç мар, 80 мĕлйун хресђен халăхне те йертсе ил-се пыраççĕ, унăн ђапĕ çавăнтан пит палла. Ђăн про-леттари револђуцсионерĕсен пурин те çапла шухăшла-малла. *Пирĕн партти хапрăк-савăтсенђи пролетта-рисемшĕн анђах тăрăшать пулсан, вăл—клас орка-нисатсийĕ мар, хупăнса пурăнакан орканисатси ан-ђах пулĕђђĕ; класăн орканисатсийĕ вăл хăйне çы-вăх класăн йышне—хресђенсене, мĕлйунĕ мĕлйунĕпе йертсе пыма пĕлет.* Ку сăмахсем комуниссен партти-не, тата ытларах комсомола тивеççĕ. РКП-тин тата РÇЛКС-ăн спесĕсенђе пирĕн йал çине çаврăнса пăх-маннине тĕппипех пĕтерес пулать, ăна пĕтерессиђи кирлĕ ĕç, мĕншĕн тесен, ăпа пĕтерни вăл «епĕ пролет-тари, мухтав турра» «мана урăх нимĕн те кирлĕ мар» тенине пĕтерни пулать. РÇЛКС-ĕн йал хушшине сарăл-малла, унăн пысăк ĕçĕ хресђен хушшинђе пулмалла. Хамăрăн Путтилăвски савăтри тата «Треукођник» ха-прăкĕнђи çамрăксенђен ыйтса пăхарха, йалта ĕçлесси çинђен нумай шухăшланăши вĕсем. Пит сахал шухăш-ланă. Левинкратри ĕçлекенсенђен—Левин вилнĕ хыç-çăн сойуса кĕнисенђен, йалшăн мĕн турăр есĕр—тесе ыйтсассăн, нумайăшĕ вĕсенђен епĕр—пролеттарисем, мĕне кирлĕ пире йал, теççĕ. Йала хаçат йарса тăни те пысăк ĕç тесен, вĕсем кулкалаççĕ анђах акă ĕнтĕ,

хресҫенсемшӗн пирӗн ҫунмалла пулаӗ вара, хаҫаӗ кирлӗ пулсан хӑйсем илсе тӑҫҫӑр, теҫҫӗ. Ҫапла пӑхнипе епӗр хамӑр ӗҫе нумайах малалла йарайас ҫук. Пирӗн хресҫеншӗн тӑрӑшас пулаӗ, ӑна пулӑшас пулаӗ, епӗр ӑна пулӑшатпӑр, малашне те пулӑшсах тӑрӑпӑр, пире ӗҫ халӑхне йертсе пыракансем, тӗп клас тесе ахаҫ калаmaҫҫӗ. Епӗр кунта «турра йурӑхлӑ» пулас тесе пулӑшас теместпӗр, хамӑр класӑн ҫленӗсем пулса калатпӑр, мӗншӗн тесен, темиҫе мӗлйун хресҫен массине пулӑшмасӑр революҫусин ӗҫӗсене ҫирӗплетейес—ҫуккине епӗр лайӑх пӗлсе тӑратпӑр.

Ман шутпа, РҪЛКС-нҫе пулнӑ тавлашусем вӗсем усӑсӑрах пулса иртмерӗҫ, мӗншӗн тесен, епӗр пӗр пӗринпе хӗрсе калаҫса РҪЛКС-е тумалли ӗҫсене тӗрӗс, лайӑх пӗлсе ҫитетпӗр. Есӗ, калӑпӑр, Ленинкратри пролетари орканисатсийӗ, ҫавӑншӑн мухтав сана, пысӑк мухтав. анҫах санӑн Ленинкратри ҫамрӑк ӗҫлекенсене ҫеҫ пухмалла мар, йалти хресҫен хушшине те сарӑласси ҫинҫен шухӑшламалла. РҪЛКС-ӗ вӑл йалти ҫамрӑксене РКП ытларах та, хӑйуллӑрах та ҫутма пултараӗ. Ҫак ӗҫе Хӗрлӗ ҫар, Хӗрлӗ хлотӑн матросӗсем урлӑ, тата ытти ҫулсемпе пырса йалпа ҫыхӑнса, йепле те пулса туса пӗтермелле. Ҫамрӑк ӗҫлекен ҫак ӗҫе тума кирлине ӑнлансассӑн, вӑл ӑна тумашкӑн темиҫе тӗрлӗ май та тупма пултараӗ. Анҫах вӑл ҫав ӗҫ ҫинҫен пикенсе шухӑшласа пӑхман. Хулапа йал пӗрлешесси ҫинҫен нумай калаҫрӗҫ, анҫах пӗрлешӳ мӗнле пулмаллипе нумайӗшӗ ӑнланаймасҫӗҫ. Халӗ ҫав ӗҫе ӗҫлеме пикенсех тытӑнас пулаӗ. *РҪЛКС-ӗн йалсентри ҫленӗсем пӗтӗм Респулӗксен*

*Сойусĕне 190.000 ҫын антђах мар, 2 мĕлйун пулмалла*. Ку шутра пур те РҪЛКС-ăн ђленĕсем мар пулин те, РҪЛКС йађђейки ҫумĕнђи тĕрлĕрен крушоксен ђленĕсем пулмалла. РҪЛКС-н ыран пайан ĕҫлемелли ĕҫĕ ҫав пулаť.

Тепĕр ик ҫултан епĕр сиртен—есĕр, комсомолĕссем, парттин реҫерви пит пахалăвтăриха, тесе ыйтмăпăр. Есĕр пахиве епĕр пĕлетпĕр, есĕр партиишĕн пит хаклă орканисатси. Сирĕвтен епĕр: „клас орканисатсийĕ“ есĕр йе „массă орканисатсийĕ“, тесе те ыйтмăпăр; епĕр сиртен: миҫене ҫитрĕҫ халĕ сирĕн РҪЛКС-ĕн йалти ђленĕсем, тесе ыйтăпăр. Тепĕр ҫултан—ĕлĕк 190 пин анђахђĕ, халĕ 290 пине ҫитнĕ—тесен, вăл есĕр нађартарах ĕҫлевине пĕлтерĕ. Ĕлĕк 190 пин пулнăђђĕ, халĕ 2 мĕлйуна ҫите пыраť, тесен, есĕр вара ђăнах пролеттари револютсионерĕсем пулăр.

## Ҫамрăксен Комунисла Сойусне кама илмелле?

Хам токлатăн ҫак ҫулте каланă сăмахсем тăрăх епĕ акă мĕн калас тетĕп: РҪЛКС никĕсĕ—хапрăк-савăтсенђи ĕҫлекенсен, ҫамрăкĕсем пулаҫҫĕ. Ҫак никĕс пулмасан, епĕр пысăк сойус тума ĕмĕтленес ҫук, унсăр пуҫне пирĕн хăрушă вăхăтсем тата та пулĕҫ. Сойусăн ҫулне хапрăк-савăтсенђи ĕҫлекен ҫамрăксем, пролеттарисем кăтартса пымалла. Вĕсем сойусăн варри пулмалла. Вĕсем хыҫҫăн иккĕмĕш вырăн, ђи аслă вырăн хресђенсем йышăнмалла, вĕсем иккĕмĕш ушкăн пулаҫҫĕ, вĕсем сойусра пит нумай пулма кирлĕ. Виҫҫĕмĕш ушкăн—хулари ҫамрăксем, тĕрлĕрен шкулсенђе вĕре-

некенсем, тӗрлӗ вак пуртуаҫи ҫемйинҗен тухнӑ ҫамрӑксем пулмалла. Вӗсен тӗлӗшӗнҗен пит хытӑ асӑрхама пӗлес пулаҫ. Вӗсене РҪЛКС-не илмелле мар теместӗп епӗ. Ӑна тума май ҫук. Анҗах кунта пирӗн кашни ҫамрӑка хӑй тӗллӗн илсе, ӑна вунӑ хут виҫсе сӑнаса пӑхас пулаҫ. Хуласенҗи мешҗенсем сойуса нумай кӗрсе тулсан, вӑл йапала пире сийен кӳме пултараҫ. Вара хулари ҫамрӑк пролетарисемпе хресҗен ҫамрӑксем хушшинҗи пӗрлешӳве хулари мешҗен ҫамрӑксем комуниссем илсе кайас тенӗ ҫулпа мар, вуҫах тепӗр ҫулпа илсе кайма пултарӗҫ. Пирӗн кунта кашни ҫамрӑка пӗр пӗринҗен уйӑрса, вӑл мӗн җухлӗ шанҗӑклине, ӗҫе, тӗрӗслӗхе йуратнине пӗлес пулаҫ, хӑйне хӑй пытарса каласмасҫ пулсан, ун пек ҫамрӑка сойуса илес пулаҫ.

РҪЛКС хӑйӗн орканисатсине җи малтан пролеттари ҫамрӑкӗсене пурне те илме тӑрӑшмалла. Вӑл унӑн җи малтанхи ӗҫӗ. Тен манран: РҪЛКС-не пролетгари ҫамрӑкӗсем хӑҫан та пулин пур те кӗрсе ҫитӗҫши?—тесе ыйтҫассӑн, епӗ: РҪЛКС-не җиена кӗмесӗр пӗр ҫамрӑк пролетгари те пулмӗ, вӑл вӑхӑт җасах ҫитӗ,—тесе тӳрех калӑттӑм. Унтан тата манран ах – РҪЛКС-не хӑҫан та пулин пур ҫамрӑк хресҗенсем те кӗрсе ҫитӗҫши, вӑл вӑхӑт хӑҫан та пулин ҫитӗши?—тесе ыйтсассӑн, епӗ тӳрех татса калас ҫук, мӗншӗн тесен, вӑл вӑхӑт җас ҫитейес ҫук. Хресҗен хушшинҗе халӗ пит тӗлӗнмелле йапаласем курма пулаҫ. Хресҗен халӑхӗ виҫӗ пайа уйӑрӑлса тӑраҫ: пӗр пайӗ—җухӑн хресҗенсем, наҗар хуҫайствӑллӑ хресҗенсем; иккӗмӗш пайӗ—вӑтам хресҗенсем; виҫҫӗмӗшӗ—пуйаннисем. Пуйан хресҗен аҗисем пире кирлӗ мар, вӗ-

сем сийен анҫах тăваççĕ. Вăтам хресҫен аҫисене епĕр илесси илĕпĕр, анҫах пит лайăх сăнаса, асăрхаса, ҫи шанҫăклисене çеç илмелле. Ҫухăннисене епĕр пурне те илĕпĕр. Апла пулсан, мĕн пур хресҫен çамрăкĕсем РÇЛКС йып не пур те кĕрсе çитесси ҫисах мар халĕ, вăл вăхăт пиртен ивçе. Ĕçлекенсен çамрăкĕсем РÇЛКС-ĕн никĕсĕ пулма кирлĕ, çав никĕс пирĕн сойусра пĕтĕмĕшпех пулмасан,—ĕçлекенсен çамрăкĕсем пур те сойусра пулмасан, ыттисем вара саланса кайĕç. Анҫах вĕсем пур те пулсан та, пирĕн лăпланса тăмалла мар, вĕсем тавра ҫухăнпа вăтам хресҫенсен аҫисене пухса сойуса илес пулаť, ун пек хресҫен аҫисем йалта пуринҫен нумайрах.

## Ленин йулташ комсомолăн сатаҫĕсем çинҫен мĕн каланă?

РÇЛКС-ĕн мĕн тумалла? Унăн мĕнле пулмалла Влатимĕр Илйиҫ РÇЛКС ĕн виççĕмĕш сйесĕвҫе каланă сăмахсем пая асран халĕ те каймаççĕ. Унăн сăмахĕсене кĕнеке туса кăларнă, есĕр пур те вуланă пулĕ.

В.И. çакăн пек ответсем панăҫҫĕ: Çамрăксен сойусĕн вĕренмелле, вĕренмелле, тата вĕренмелле, унăн малтанхи ĕçĕ çав пулаť, унтан тата сойусăн парттийе çирĕплетес ĕçе хутшăнма тăрăшас пулаť, çав ĕçе хутшăнма вăл лайăх пултарати, пултараймасти, çавах унăн ҫаранса тăмалла мар, ку иккĕмĕш ĕç, вĕсем малтанхипе йунашар пулмалла. Çак иккĕмĕш ĕç çинҫен каланă ҫухве В. И. акă мĕнле примерсем илеҫҫĕ. Вăл примерсене В. И. 1920-мĕш çулхи сйесрех каланă, çавăнпа та унăн примерĕсем ун ҫухнехи самана майлă.

В. И. примерӗсем ҫаксем: „комунисла сойус ђлевӗсем хӑйсен пушӑ вӑхӑђӗсене пӗр сехетне те ахаљ ирттерме йурамасӑ. йе хапрӑк савӑтсенђи, йе пахђара ӗҫлесе ҫимӗҫсем хатӗрлес пулаӑ, йе хапрӑк-савӑтсенђи ҫамрӑксене вӗрентес ӗҫе орканисатсилес пулаӑ". Ҫимӗҫ пахђисенђе ӗҫлес пулаӑ тени хаљхи вӑхӑтра вырӑнлах пулмӗ. Халӗ хулари ӗҫлекенсем ҫимӗҫ пахђисенђе ђаваланма пӑрахнӑ. Анђах ун ђухне хулари ӗҫлекенсем выҫӑхнӑ вӑхӑтђӗ, ҫавӑнпа та пахђа ҫимӗҫ тӑвас ӗҫ ун ђухне ӗҫлекенсемшӗн ђи паха ӗҫ пулнӑ. В. И. калатђӗ: ҫамрӑксен пӗр йенђен Маркс ҫинђен тӗплӗ вӗренес пулаӑ, тепӗр ђухне ҫимӗҫ пахђинђе ӗҫлес пулаӑ, тетђӗ. Вӑл ун ђухне ҫамрӑксене ытлашши кӑмӑллӑ ӗҫ паман": Урамсене хапрӑк савӑт ҫурђӗсене таса тытма тӑрӑшӑр, вӑл ӗҫе тума пулӑшӑр,—шӑлӑр, тасатӑр тенӗ. Нимӗнрен ытла ыттисене таса пурӑнма вӗрентӗр, ӗҫхалӑхӗ, куљтурӑ йенђен те, сывлӑх йенђен те малалла кайасси таса пурӑнма пӗлнинђен килнине каласа ӑнлантарӑр. Тӗрлӗрен ҫимӗҫсене валеҫнӗ ђухне ӗҫе тӗрӗс тутарма пулӑшӑр" тенӗ. Ҫак сӑмахсене вӑл ҫимӗҫсене картӑђкӑсем тӑрӑх панӑ ђухне каланӑ, ун ђухне пӗр кӗрепонке ҫӑкӑр кашни кунхи тӗп шухӑшђӗ. Унтан тата вӑл: ҫыру пӗлменнисене вӗрентме пулӑшӑр, патшалӑха електритсӗлес ӗҫре, пирӗн комунисла сойус пулӑшма пултарайміӗши, тесе хӑвӑр пуҫ мимисемпе хытӑрах шухӑшласа пӑхӑр,—тесе каланӑ. Ленин йулташ РҪЛКСне тума хушнӑ ӗҫсем ҫаксем ӗнтӗ. Ман шухӑшпа, халӗ вӑл пирӗншӗн сахал. 1920-мӗш ҫулта РҪЛКС-ӗ нађар орканисатсиђӗ, ун ђухне вӑл хӑйӗн тымарӗсене хаљхи пек шала йарайманђӗ. Респулӗк ун ђухне пит

хăрушă вăхăтраҫҫĕ. Ҫавăнпа та 1920-мĕш ҫулта,—ҫимĕҫ пахҫине сухалама, ҫимĕҫ тума пулăш, урамсене, килҫуртсене таса тытма пулăш, ҫыру пĕлменнисене вĕрентме пулăш,— тесе вĕрентни кирлĕ пулнă. Халĕ сойус умĕнҫе пит пысăкрах ĕҫсем тăраҫҫĕ.

## РҪЛКС-ăн халĥхи ĕҫĕсем.

Ленин йулташ калаңă сăмахсем вĕсем—пур те вырăнлă сăмахсем, вĕсем халĕ те кирлĕ сăмахсем, вăл калани ҫумне акă мĕн хушмалла. РҪЛКС умĕнҫе хĕрлĕ ҫарта тата хлотра ĕҫлемелли ĕҫ тăраĭ. Епĕ сире кунта мĕнле ĕҫлемелли ҫинҫен халех план кăтартса парас теместĕп. Халĕ пирĕн хушăра, РҪЛКС-ĕн йаҫҫейккисеве ҫар пайĕсенҫе те органисатсилеме пуҫласси ҫинҫен калаҫаҫҫĕ Ку тĕлĕшрен мĕнле усă пулассине пур те ăнланаҫҫĕ. Авҫах ҫарти йĕрке пирки ҫылай пысăк инкексем те пулма пултарĕҫ. Ку ĕҫ мĕнле пулмалла ҫинҫен епĕ халĕ калама пултараймастăп, ҫар пайĕсенҫе РҪЛКС ăн йаҫҫейккисене тума май килмест пулĕ тен. Анҫан РҪЛКС ăн хĕрлĕ ҫарти ĕҫĕ пит пысăк, вĕҫĕ хĕрри курăнми аслă, вăл ĕҫ шех ĕҫĕ пек ҫийелтен туса пымалли ĕҫ мар. Епĕ шехсене хирĕҫ мар. Вăл акигатси йĕнҫен те, вĕрентес тĕлĕшĕнҫен те пит пысăк усă параĭ. Пирĕн хлотри матроссен тумтирĕсем ҫĕр 30-40 мунтир комсомолĕссем патне куҫнăшăн та ĕпĕ питех хирĕҫ пулмастăп, вăл мунтирсемпе комсомолĕссем паратсенҫе пит капăр ӏанса ҫӳреҫҫĕ. ун ҫинҫен епĕ хирĕҫ нимех те калама пĕлместĕп.

Пирĕн çар çамрăкланса пырать. *Пирĕн Хĕрлĕ çара халĕ хĕçпăшаллă РÇЛКС теме те пулать.* Малашне вăл ҫăн çапла пулĕ. Пирĕн çарта çамрăк хресҫевсем пур, вĕсен пурин те РÇЛКС-не çакланмалла. Пирĕн халĕ Хĕрлĕ çарта хлогри ĕçе йĕркеллĕ, лайăх тусă тăрасси çинҫен шухăшламалла. Унтан тата РÇЛКС-ăн йалти, тата копператсири ĕçĕ ҫеретре тăрать. Копператси ĕçне В. И. пирĕн партти те мĕнле кирлĕ ĕç вырăнне шутланине, есĕр пур те пит лайăх пĕлетĕр. Ĕçлекенсен класĕ тытса тăракан пагшалăхра епĕр копператсине сотсиалисăмлă пурнăçăн пуçламăшĕ тетпĕр. Çавăнпа та ăва ç нĕ вăйсем кирлĕ. Епĕр копператси ĕçне ĕлĕкхи кивĕ копператтăрсем, лапка хуçисем çине хума пултараймастпăр. Пире çĕнĕ копператтăр кирлĕ. пире лапкара сутса тăма пĕлекен çын анҫах мар, копператси ĕçне ҫунтан, ҫĕререн ырă сунса хавасланса тăвакан çын кирлĕ. Пĕр хавасланнипех те нумай малалла кайаймăн, унсăр пуçне сутуилӳ тума, шутлама т. ы. пĕлес пулать. Анҫах пире хавасланакан çын та кирлĕ. Çапах та хавасланнипе кăна сахал. Пуринҫен ытла ĕçе пĕлни, вĕренни кирлĕ. Çавăн пирки РÇЛКС-ĕн шухăшлама пуçлас пулать, хăйĕн йышăнҫен копператси ваҫҫи çынсем хатĕрлесе парса тăрас пулать, малтан вĕренме, кайран копператси ĕçне тума йарса тăрас пулать.

РÇЛКС-ĕн йал советсенҫе, пĕр пĕрне пулăшакан комиттетсенҫе, тĕрлĕ çĕрте тăракан çар пайĕсенҫе ĕçлемешкĕн çынсем хатĕрлемелле. Пур çĕрте те РÇЛКС ҫленĕсем ĕçлемелле. Пирĕн Çамрăксен Сойусĕнҫен çĕнĕ

çынсем, хăйсене хăйсем майĕпе çĕнетсе комунисăмлă пурнăç тăвас ĕçе малалла йама пулăшакан çынсем илмелле. Çĕрпе вăрман ĕçне тăвакансен прохвеççи сойусĕ хаљ тин кăшт малалла кайма пуçларĕ. Йалсенђе тара кĕрĕтсе ĕçлекенсем курăна пуçларĕç, çĕрпе вăрман ĕçне тăвакансен прохсойусăн çавăн пек çынсене пĕрлештермелле пулаť. Унăн ĕçĕ вĕсен хушшинђе пулмалла. Çĕрпе вăрман ĕçне тăвакансен прохсойусне РÇЛКС ђленĕсене йури суйласа йамалла. Йалсене шеха илесси, пĕрле пурăнмалли çуртсем, вуламалли çуртсем тăвасси, тăлăха йулнă ађасемшĕн тăрăшасси,—çаксем пур те çамрăксен сойусĕн ĕçĕсем. Хăш хăш çамрăксем çавăн пек ĕççенђен пăрăнаççĕ.—Çаксем пирĕн ĕçсем пулаççĕи? Мĕне кирлĕ пире ун пек пĕђĕк ĕçсем? теççĕ. Таçти шăтăксене кĕрсе кайса тăлăх ађасене шыраса çӳрес пулаťиха вара пирĕн? Епĕр—РÇЛКС ђленĕсем, пирĕн умра пĕтĕм тĕнђене тепĕр май çаварса лартас ĕç тăраť, пĕђĕк ĕçсемпе çыхланмастпăр, теççĕ. Есĕр, РÇЛКС ђленĕсем, пĕтĕм тĕнђене тепĕр май çаварса лартатăр, увшăн сăмах çук, анђах ăна çаварса лартас тесен, сирĕн çавăн пек кирлĕ ĕççенђен пăрĕнме йурамасť, вĕсене туса тăрсан çеç тĕнђене тепĕр май çаварса лартма пултарăр. Тăлăх ађасемшĕн есĕр тăрăшмасан, кам хыпĕ вĕсемшĕн? Кам çине хурас тетĕр вара вăл ĕçе? Вăл ĕçе сиртен пуçне кам хастарлă тытăнма пултарĕ? Çиђĕ çул ирĕкре пурнакан çĕршывра, В. И. Ленин тытса тăнă патшалăхра, тăлăх ађасем халĕ те пиНĕ пинĕпе пур.

Хăçанҫен ҫăтса тăмалла пирĕн çав намăса? Ман шухăшпа ку ĕç комсомолĕссем тăвакан мункунран пĕрре те кайа мар пулма кирлĕ.

Хресҫенсене çĕр ĕçне тума вĕрентмелле. РÇЛКС-ĕ çак ĕç йенне те питех пăхасшăн мар. Мĕншĕнши? Сирĕн хăвăр хушăрта акрономсем сахал. Анҫах есĕр йалта пурăнса, çĕр ĕçне мĕнле тĕрĕс тумалли, çĕре мĕнле тугăлантармалли çинҫен çырнă кĕнекене, 3 пус тăракапскерне, хресҫенсенҫен ҫасрах тупма пултаратăр, ун пек кĕнекесем хресҫенсене пит пысăк усă пама пултарăççĕ. Сирĕн хушăртан хресҫен акрономĕсем ҫылай тухĕç, ку тĕрĕс мар тесе никам та калаймĕ. Сирĕн сойусăн хулари техниккăна вăйлăлатас çинҫен вĕрентес ĕçе хăй çине илнĕ пекех, *йалхуçайствине вăйлăлатас çинҫен вĕрентес ĕçе те хăй çинех илмелле*. Унтан çамрăксем ĕççĕр йулни çинҫен калаçмалла. Çамрăксем хушшинҫе ĕççĕр йулнисем пит нумай. Пире пĕлтернĕ тăрăх каласан, ĕççĕр йулнă çамрăксем, ĕççĕр йулнă çитĕннĕ çынсенҫен нумайрах. 1923-мĕш çул хушшинҫе ĕççĕр йулнă çамрăксем 80% çитнĕ. Ку йапалапа кĕрешме пит хĕн ĕнтĕ, ăна куçран ҫасах çухатмалла мар, анҫах ун çинҫен шухăшлама пикенсех тытăнас пулаĭ.

Унтан тата йалсенҫе йалхуçайстви çинҫен вĕренмелли крушоксем тăвас пулаĭ. Çавăн пек крушоксене епĕр РÇЛКС-ĕн йалсенҫи йаҫҫейккисем çумĕнҫе мĕншĕн тума пултараймасгпăр пулĕ? Вĕсене тума пулаĭ, вăл крушоксене хресҫен çамрăкĕсене илсе, вĕсене малтан йалхуçайствинҫе ĕçлесси çинҫен вĕрентмелле, унтан вара вĕсем хăйсемех политтĕк ыйтăвĕсем çинҫен

каlаçма, итлеме йуратакан пулса кайаççĕ, пирĕн хыç-ранах пыма пултараççĕ.

Унтан тата Халăхăн Çут̆лăх Комиссариатне унăн тĕрлĕрен ĕçĕсене тума пулăшас пулаt̆. *Халçуткомпа РÇЛКС хушшинчи тавлашнине, шăшисемпе шапасен тавлашнине, пĕтерес пулать. Кайаш учитĕлĕсемпе краштаилă килĕшмелле.* Тимĕр савăтĕсенче ĕçлекенсен прохсойусĕ çумĕнче иншенерсен çексийĕ пур, çав çексийе сойус пит лайăх ĕçлеттерсе, хăй йенелле майĕпе туртса çыпăçтарса пыраt̆. Тимĕр савăтсенче ĕçлекенсемшĕн иншенер кам вырăнче шутланаt̆, учитĕл те РÇЛКС-шăн çав шутрах пулмалла. Тата учитĕл РÇЛКС-не çывăхарах тăраt̆, иншенер ĕçлекенсенчен инçерех тăраt̆, мĕншĕн тесен, учитĕлпе иншенер вĕсем пĕр пек пурăнмаççĕ. Учитĕл уйăхне 30 тенкĕ, нумайăшĕ 15 тенкĕ анчах илет. Çавăнпа та иншенер пурнăçĕ çинчен мĕнле шухăшлама пултарĕ вăл. Тимĕр тăвакан савăтсенче ĕçлекенсем хăйсен иншенерĕсене прохсойуса илсе, вĕсене прохсойус сывлăшĕпе сывлаттармалла тума кирлине ăнланса çитнĕ пулсан, çавна РÇЛКС-ĕн учитĕлсем тĕлĕшĕнчен ăнланас пулаt̆, учитĕлсемпе тавлашма пăрахмалла. РÇЛКС умĕнче тăракан пысăк ĕçсене тума учитĕл çамрăксен сойусне пит нумай пулăшма пултараt̆. çамрăксен сойусĕн ăна пулăштарма пĕлес пулаt̆.

## Ерех таврашĕпе кĕрешмелле.

*Йалсенче самăкунпа кĕрешмелли крушоксем тăвас пулать самăкун çынна мĕнле сийен тума пултарни çинчен хрестчен çамрăкĕсене вĕрентес пулать.*

РҪЛКС-ӗн хӑйӗн ђленӗсене тапак туртма пӑрахтарас ӗҫе тытӑнас пулат̆. Хутте мӗнле ӗҫе те пӑсма, тирпейрен кӑлармa пит ђас пулат̆. Самӑкунпа ерех ӗҫме, тапак туртма пӑрахтарас ӗҫе те ђысах пӑсма пулат̆, сотсиал-темократсен ирсӗр мешђенӗсен ҫулӗпе кайсан, вӑл ӗҫ йурӑхсӑра тухса каймалла.

Ун пек мешђенсен апшӗ амӑшӗсем хӑйсен ывӑлӗсене праҫнӑк купсенђе ӗҫмелле марри ҫинђен вӗрентеҫҫӗ. Вӗсем сӑра тӑвакан савӑгри ӗҫе пӗрик кунлӑха ђарсан, ӑна тем вырӑнне хураҫҫӗ. Анђах пире ун пек икӗ питлӗ ӗҫ кирлӗ мар. Кунта пире пупсен проповӗђӗ те кирлӗ мар. Епӗр пӗлетпӗр: комунисӑм йӗрки типӗ тытнинђе мар, тӑвас килнӗ йапалана туманнинђе те мар. Епӗр пурнӑҫра мӗн кирли ҫителӗклӗ пулмалла, пурнӑҫӑн ырӑлӑхӗнђе савӑнса ӗҫлемелле тӑвасшӑн, пире ҫавӑн пек пурнӑҫ кирлӗ. Пирӗн патшалӑхра ӗлӗкхи каҫункка йӗррисем пӗтмен хаиӗ. Вӑл йӗрке темиҫе сыпӑка анкӑминкӗлентерет, пӗр 50-60 ҫул ӗлӗкрех тата тискертерех вӑхӑтсем пулнӑ, халӑх улпугсен аллинђе выђӑх шутӗнђе кӑна пулнӑ, халӑх ҫырӑва пӗлмен, ҫав авалхи ирсӗр йӗркесен тымарӗсене хӑртасси, вӗсене сирсе йараси—револютсин ӗҫӗ. Епӗр куђгурӑн ырлӑхне ђухлакансене, самӑкунпа тапак туртнипе кӗрешме кирлине пӗлекенсене ӳстерсен, вара револютси панӑ ырлӑхсене курас йенђен, унӑн ӗҫӗсене ҫирӗплетес йенђен ђылай малалла кайӑпӑр. Епӗр хамӑра хамӑр Ленинтсӑсем тесе пит ђаплӑн калатпӑр. Ат̆ӑр ҫак пӗђӗк ӗҫре те В. И. вӗрентнӗ хыҫҫӑн кайма тӑрӑшар. Вӑл ӗҫсене мӗнле тумалли ҫинђен пайанах татса ка-

ласа сăмах пĕтермелле тĕместĕп епĕ. Çамрăксен союсĕн сиесенҫе мана калаçма лексен, епĕ çак ыйту çинҫен каласа пама тăрăшăп. Анҫах ĕçе тытăнас пулсан сăмахпа мар, ҫăнах та ĕçлеме тытăнмалла. Тапак туртма пăрахмалла тесе ресолюци йышăнса, ҫĕлĕм тĕтĕмне çанă ăшне йарса туртас мар. Унтан тата ĕçе пуçăннă майĕпе савăннипе пĕрик путылккă ĕçсе йамалли те кирлĕ мар. Ку ĕç çинҫен пит тĕплĕ шухăшлас пулаť, вара çине тăрса ĕçлеме тăрăшмалла.

## Тĕн сĕрĕмне пĕтересси.

Йулашкинҫен тĕне хирĕç мĕнле вĕрентмелли çинҫен калаçмалла. Çак çулта епĕ сирĕн йулташсем ҫĕннипе „комсомолĕссен мункунĕнҫе“ 2-3 хут пултăм. Пит савăнăçлă пулҫĕ тесе те каламастăп. Пирĕн çитменлĕх вăл пур ĕçре те палăраť, кунта та наҫар хатĕрленни палăрҫĕ. Анҫах вăл ĕçе пуçлани пит аван, ăна малашне те йалапах тăвас пулаť. Кунта пупсемпе кĕрешни курăнаť. Çав каç пупсем темиçе çĕр пин краштансене ҫиркӳве пухасшăн пулнă, есĕр хăвăр сопранисене итлересшĕн пулнă. Хăшĕ çĕнтерҫĕçши ку çулта, тӳрех калама хĕн. Çапах комсомолĕссем пупсене çĕнтереймерĕç пулĕ. Ленинкратра пурнакан халăха пурне те итлесессĕн, çак каçра сирĕн патра нумайĕшĕ пулман. Ку ĕнтĕ тин пуçланă ĕç, анҫах ăна кашни çулах туса иртермелле, малтан лайăх хатĕрленес пулаť.

Епĕ пĕр районра тĕнсем çинҫен токлат тунине илтрĕм. Токлатне тăвакан йулташ лайăх хатĕрленнĕ, анҫах кĕнекесем çинҫен нумай примерсем илҫĕ, пурнăç-

ран илсе нимех те каламарĕ. Пирĕн Ленинкрат оркаписатсинҫе ҫавăн пек токлатсем тума лайăхрах хатĕрленме, вĕсене итлеме кăмăллăрах, савăкрах пултăр тесе хатĕрленме май пур пулĕ тетĕп. Тĕне хирĕҫ вĕрентмелле мар тесе калас ҫук епĕ, анҫах миҫе каласан та вăл ĕҫе пĕлсе тăвас пулат̆, ăна пĕлес тесен тĕн ҫинҫен лайăх пĕлсе ҫитес пулат̆. Пупсем айваннине пур те пĕлеҫҫĕ. Вăл йенҫен вĕсем хăйсене хăйсем пит лайăх палăртреҫ. Ейĕ пупсенҫен мăшкăлас мар тесе каламастăп, вĕсенҫен кулма епĕ те йурататăп. Пупран мăшкăлас тесе хресе урăх вырăна ҫаксан, епĕ уншăн та пĕр сăмах та хирĕҫ калас ҫук. Анҫах пирĕн ĕҫ тĕнҫери ҫи айван пупран, хресҫенсене пĕр ҫаранмасăр ҫаратакан пупран мăшкăлассинҫе мар (пупĕнҫен унтан лайăхрах мăшкăлас, кулас пулат̆), унсăр пуҫне тата пирĕн акă мĕне пĕлес пулат̆: тĕне ăна пит ҫинҫе, ҫейе ҫулпа илсе пырса ҫирĕплетвĕ, унăн тымарĕсем пит ҫирĕп, ҫавăнпа та „таса турă“ сирĕншĕн ҫи усал тăшман пулмалла. РҪЛКС-ĕн халĕ тĕне хирĕҫ вĕрентес ĕҫе сарса йарассинҫен ытларах ăна тĕплĕ вĕрентсе тарăнрах йамалла. РҪЛКС-ăн ҫленĕсем ҫур мĕлйуна ҫитеҫҫĕ, вĕсем пурĕ тенĕ пекех тĕне курайманҫҫĕ, анҫах вĕсем тĕне мĕншĕн курайманнине хăйсем те пур те пĕлмеҫҫĕ, ҫавна пурин те пĕлес пулат̆, вара тин вĕсем турра маннă ҫынсем, маттериалиссем пулма пултарĕҫ. Ку ĕҫе епĕр халĕ пуҫламанпа пĕрех.

Йулашкинҫен тата РҪЛКС-ăн халăх хуҫайствине ура ҫине тăратас ĕҫе хутшăнасси ҫинҫен калаҫмалла. Ҫак ĕҫе хутшĕнмашкăн комсомолĕссем вађҫи пур ҫĕр-

те те аläксем уçах выртаççĕ. Кашни происвотствă конференсинҫе çамрăксен ҫи малта пулмалла. 1920 мĕш çулта В. И. çимĕç пахҫине аса илсе,— комсомолĕссен пахҫа-çимĕç тăвас ĕ ре ҫи малта пулмалла,— тенĕ. Халĕ, хуçайствă пăртак ура çине тăра пуçланă ҫух, епĕр тата пысăкрах ĕççем тумă тăрăшатпăр. Комсомолĕссем хутшăнмасăр пĕр ĕç те пулса иртмелле мар. Комсомолĕссен ĕçлекенсен ҫи паттăр огреҫĕ пулмалла, ăçта та пулсан йăвăр ĕç пулсан, ун пек çĕрте комсомолĕссен каллех ҫи малта пулмалла. Çĕнĕ ĕçе пуçартас çĕрте,—пуçартас çĕрте анҫах та мар, (пуçлама ăна пур те пĕлетпĕр). унтан тата тĕплĕ туса пĕтерес çĕрте —çавсенҫе йаланах комсомолĕссен ҫи малта пулмалла. Хут пĕлменнисене вĕрентме В. И. 1920-мĕш çултах хытă ҫĕнҫĕ, анҫах вăл ĕç пирĕн халĕ те пĕтмен. В. И. калаҫҫĕ: 500 пин çамрăк аҫасемпе хĕрсен çав хут пĕлменнисене вĕрентме пикенсех пулăшас пулаҫ, тетҫĕ. Нумай пулăшрĕçиха? Пит сахал. Çав сăмахсене ҫи аслă çын, В. И. каланă—пулин те, епĕр çав 1920-мĕш çултах тумалла ĕçе халĕ те пĕтермен. Револютси ĕçĕсем малалла кайнă майĕпе сирĕн çĕнĕ ĕççем вуншарăн вуншарăн сиксе тухаççĕ. Хĕрлĕ çарта, хлотра, копператсире, пĕр пĕрне пулăшакан комитетсенҫе, вырăнсенҫе çара вĕренекен çĕрте ĕçлесси, тăлăх аҫасене пулăшасси, самакунпа кĕрешесси, политçут ĕçне тăвасси, хресҫенсене çĕр ĕçне акрономи вĕрентнĕ пек тума пулăшасси, ĕççĕр йулнисене, Халçуткомне (Наркомпроса) пулăшасси, йалсенҫе тĕрлĕрен крушоксем тăвасси, тĕне хирĕç вĕрентесси, йулашкинҫен тата халăх хуçай-

ствине ура çине тăратасси—çаксене пысăк ĕçсем мар тесе, комсомолĕсем ваҫҫи ĕçсем çук, тесе кам калĕ ĕнтĕ? Хугте мĕнле ĕçре те партгийе кĕнĕ ĕçлекенсенҫен, —прохсойуссенҫе ĕçлекенсенҫен ўкерҫĕк илес пулаĭ сирĕн, вĕсенҫен вĕренес пулаĭ, çўлтен пăхса, уткаласа çўреме кăна йурамасĭ, ман шутпа, РÇЛКС-нҫе савăнса ĕçлемелле мĕншĕн тесен, пирĕн умра йăвăр ĕçсем, кирлĕ ĕçсем купипе выртаççĕ. Çапла ĕнтĕ сирĕн мĕн тумаллине уйрăм уççипех каласа патăм пулĕ тесе шухăшлатăп епĕ.

## Вĕренессине ан манăр.

Унтан тата пирĕн пит нумай вĕренес пулаĭ. Ман шухăшпе, пирĕн *ĕçлесе вĕренес пулат*, *тата вĕренсе ĕçлес пулат*.

Мĕне вĕренмелле? Каласах епĕ В. И. сăмахĕсене аса илтĕм, вăл калаĭҫĕ: комунисла кĕнекесемпе тĕрлĕрен лосунксем тăрăх çеç мĕне те пулин вĕренме пулаĭ тесе есĕр ан та шухăшлăр. Кивĕ шкул йурăхсăр йапала кинимĕн те паман тесе калани те пит йăнăш сăмах. Кивĕ шкулта ҫăнах та кирлĕ мар йапаласем çинҫен нумай вĕрентеҫҫĕç, анҫах унта вĕренгнисем пур те йурăхсăр марҫĕ. Кивĕ шкулсенҫе кирлĕ мар йапаласем çинҫен нумай вĕрентсе çынна хăшкăлтараҫҫĕç, çапах комунисла кĕнекесем тăрăх çеç вĕренсе те ҫăн комунис пулаĭ, —тесе ан та шухăшлăр. Кивĕ шкултан мĕн усăллине пурне те илмелле. Ман шухăшпа ҫи малтан йеçтествосванине, Тарвинисăм çинҫен *вĕренес пулат*. Унăн никĕсне тăнлă пуçлă ĕç çынни кашнийех хăй тĕллĕн те

вĕренсе пĕлме пултарать, вĕренес килни çеç пултăр. Ăна вĕренмешкĕн çăмăл ђĕлхепе çырнă кĕнекесем пур, пĕрле пухăнса вĕсем тăрăх крушоксенђе пур те вĕренме пултараççĕ. Унтан малалла политтĕк екконономийĕ, истори, револьутси историйĕ çинђен вĕренес пулать. Вĕсене вĕренмесĕр комунисăм пулмĕ. Вĕсене вĕренмешкĕн кĕнекисем нумай. Тата малалла культурă историне, хамăр парттин историне вĕренес пулать.

Маркспа Ленин çырнă кĕнекесенђен пĕрине те пулин сирĕн пĕр çул хушшинђе лайăх, тĕплĕ вуласа вĕренес пулать (пĕр уйăх хушшинђех вĕренме каламастăп епĕ сире, тума пултарайман ĕçе хушма çук). Çавна вĕренесси—сирĕн прокрамă пулма кирлĕ. Анђах вăл прокрамă тăрăх вĕренсе тухас тесен, кашни странитсăна, кашни сăмахха тăппа вуласа пуçра хăварас пулать, кирлĕ сăмахсене çырса илес пулать, мĕн вуланине ăнлавма тăрăшас пулать, пуç миммипе лайăх шухăшласа нихăçан мăнми пĕлсе йулас пулать. Авă мĕн тумалла сирĕн—кашни çамрăк комунисăн. Çаксене епĕр пурне те тусан, кивĕ шкулсенђе вĕренсе пĕлни çумне, револьутси историйĕ, политтĕк екконономийĕ, культурĕ историйĕ, партти историйĕ, тата йестествоснани çинђен вĕренсе пĕлнине хушсан, унтан тата Маркспа Ленин вĕрентнине пĕлсен (кунта епĕ Маркса́н „Кăпиталне“ вĕренме каламастăп, ăна есĕр халех вĕренейĕс çук, Маркспа Ленинăн çăмăлрах ђĕлхепе çырнă кĕнекисем тăрăх вĕренме калатăп, мĕншĕн тесен, Ленин йул. „сахалрах пулин те пултăр, анђах лайăхрах пултăр,“ тет-

ҫӗ), вара есӗр ҫамрӑксен комунисла сойусӗ ӳснӗҫемӗн ӳссе, ҫирӗпленсе пынине, ҫӗнӗ ӑру пулнине хӑвӑрах курӑр.

# РКП-пе РҪЛКС-ӑн пӗр пӗринпе мӗнле ҫыхӑнса тӑмалла.

Ана есӗр пур те пӗлтӗр. Вӗсем, хӑй пӗҫӗк йӑнӑшсем ҫинҫен каламасан, пӗрне пӗри лайӑх пӗлеҫҫӗ. Ҫи малтан ӗнтӗ „пӗр тивӗҫлӗх“ (равноправи) ҫинҫен калас пулаҫ. Пирӗн хушӑра хӑш ҫухне калаҫҫӗ: ҫамрӑксен комсойусӗ вӑл—урӑх патшалӑх, партти—тепӗр патшалӑх, ҫавӑнпа та епӗр—комсомолӗссем—пӗр тан, теҫҫӗ. Пӗр вӑхӑтра прохсойуссенҫе те ҫавӑн пек тавлашу пулнӑҫӗ. Епӗр, прохсойуссем,—пӗр патшалӑх, партти—хӑй тепӗр патшалӑх, пирӗнпе пӗр тан, тетҫӗҫ. Поҫшевиксем апла каламаҫҫӗ. Ленин йулташ пек, поҫшевиксем пек пӑхсан, партти политтӗк ӗҫне анҫах тумасҫ. Сотсиал-темократсен катехиҫисӗ тӑрӑх, вӑл ҫӑнах та ҫаплаҫҫӗ: парттин—политтӗк, прохсойуссене—промышленнӑҫ, клупсене—куҫтурӑ-ҫутӑлӑх ӗҫ, копператсине—суту-илӳ т. ы. *Поҫшевиксем майлӑ каласан, партти—ӗҫлекенсен класӗн пуҫлӑхӗ, партти пурне те пӗр ҫыхӑпа ҫыхса тӑрат.* Ӗҫлекенсен класӗн парттийӗ копператси ӗҫне те клупсенне те, РҪЛКС ӗҫне те, хуҫайствӑ уҫрештенисен ӗҫӗсене те. Хӗрлӗ Ҫар ӗҫне те, пурин ӗҫӗсене те пӗлсе йӗркелесе тӑраҫ, политтӗк ӗҫне анҫах тумасҫ. Политтӗк ӗҫне анҫах тусан, вӑл партти виҫӗ пус та тӑмасҫ. Пирӗн парттире—пӗр йенҫе—партти, тепӗр йенҫе—РҪЛКС, вӗсем иккӗшӗ те пӗр тивӗҫлӗ

теме май çук. Партти вăл хăй тĕллĕн, уйрăм оркани-сатси, РÇЛКС-ĕ унăн пайĕ пулаť, çавăнпа та пайĕ уйрăмĕпе пĕр тивĕçлĕ пулма пултараймасť. Кунта епĕр парттийе мăн кăмăллă тăвас теместпĕр. Епĕр ун йенне кайас çук, анђах РÇЛКС-ĕ пĕђĕк пай, унăн парттипе пĕр *тивĕçлĕ теме* йурамасť, *çавăн пек шухăша сирĕн хăвăр пуçăрсенђен кăлареа ывăтас пулаť.*

Унтан тата пирĕн „ни унталла мар, ни кунталла мар“ („нейтральность“) тенĕ йăлана пĕтерме тăрăшас пулаť. Пит хĕрӳллĕ тискуççи—парттийе ђĕтретсе пăрахнă тавлашу,—пуçланса кайсассăн, çавăн ђухне хăш хăш йулташсем—РÇЛКС-не „ни унталла мар, ни кунталли мар“ оркănисатси тăвасшăн хăтланђĕç. Пирĕн мĕн ĕç пур, мĕн тума пырса перĕнмелле пирĕн епĕр кирлĕ мар çĕре, пирĕнсĕрех тавлашĕçха, епĕр, нихăш йенне те тăмăпăр, тетђĕç. Çакна хирĕç кĕрешес пулаť. Пĕр вăхăтра прохсойуссенђе те çаплах калаçатђĕç: епĕр политтĕклă кĕрешӳрен айакра тăратпăр, тетђĕç. Вăл ĕçрен прохсойуссем нихăçан та айакра тăман. Ни унталла мар, ни кунталла мар тенĕ теори вăл хвађ-шивăй йапала, çав йенђен унăн çитменлĕхĕ пур: „Ни унталла мар, ни кунталла мар“ пулас тени вăл пур-нăçра пулма пултараймасť. Йана хăш ђухне, çав сăмах хӳтипе пытанса, хăй кам майлине каласшăн мар пулса йулма анђах персе йараççĕ. Епĕр ни унталла мар, ни кунталла мар пулма пултараймастпăр та, ун пек пулас та çук. РÇЛКС-ĕн те ун пек *пулмалла мар.* Пурне те ђĕтретсе пăрахнă тискуççи пынă ђухне (çамрăксен ыйтувĕ çинђен калаçнă ђухне, аслă шкулсенђе вĕренекенсем

пăрăгса айакра тăмарĕç, хăйсен шухăшĕсене тӳрех кăларса хуђĕç. Вĕсем нимĕн пытармасăрах тӳрех калани усал ĕç мар, анђах вĕсем пођшевиксем пек шухăшламан, çав аван мар. Сирĕн те хăвăр мĕн шухăшланине каламалла, вăл сирĕн ĕç, çирĕн тивĕç пулаӗ. Ун ђухне пăрăнса айакра тăчă пулсан ĕçĕр РÇЛКС марђĕ вара. Ни унталла мар, ни кунталла мар пуласси вăл — çĕрĕк йапала, ăна хирĕç кĕрешес пулаӗ. Пите çĕрĕк кĕççепе витсе калаçни пире кирлĕ мар. Есĕр Ленин çамрăкĕсен ђăн сойусĕ пулас теттĕр пулсан çавăн пек хĕрӳ тискуççисем пынă ђухне ни унталла мар, ни кунталла мар ан пулăр. Малашне сире кам та пулин—ни унталла мар, ни кунталла мар пулас пулаӗ—тесен, ун пек çынсене есĕр ĕнсерен парсах хăваласа йарăр. *Тĕнђере çавăн пек ĕçре ни унталла мар, ни кунталла мар (нейтральность) пулма пултараймасӗ.*

## Çамрăксен Комунисла Интернатсионалĕ.

Çамрăксен Ком. Интерн. (ÇКИ) мĕнле оркаписатсине, РÇЛКС-не кĕрекенсене вăл мĕн пĕлме хушнине, комсойус ђленĕсем пур те пĕлмеççĕ пулĕ тетĕп епĕ. ÇКИ оркунсерен мар, сехетсеренех ӳссе пыраӗ. Епĕр вăл оркаписатси ӳссе пынине асăрхама пултаратпăр. Епĕ кунта сăмах хитре пултăр тесе мар, ђăннине калатăп.

ÇКИ вăл—пĕтĕм тĕнђипе комунисăм мĕлки сарăлнă ђухне пирĕншĕн пит пысăк савăнăç. Ун ăшĕнђе урăх ђуставан пулнă çĕнĕ сыпăк (ăру), импперализăм вăрçин, тата пĕтĕм тĕнђери револютсин пуçламăшĕн çил тăвăлĕ айĕнђе писнĕ сыпăк ӳсет. Ун ăшĕнђе пĕтĕм

тĕнҫери ĕç халăхĕн ҫĕнĕ отреҫĕ, сотсиал-темократсен тĕшмĕшĕсене пĕлмен отрет ӳсет. Хаҫ унăн наҫăр тĕлĕсем те пур, ҫапах та вăл кивĕ сыпăкран темиçе хут паха.

Вăл сотсиал-темократсен контр-револютсиллĕ йурăхсăр ĕçĕсене те сисрĕ. Çĕнĕ вăрçă çывхарсан унăн ответ тытас пулаĭ, вăл ăна та пĕлҫĕ, çавăнпа та вăл хăйĕн комунисла орканисатсине çирĕплетет, хатĕрлет. Çав орканисатсире çĕнĕ вăйсем, çĕнĕ паттăрсем, малашне пĕтĕм тĕнҫипе пулас револютсийе йертсе пыракансем ӳсние курса епĕр ҫунтан, ҫăререн савăнатпăр. Пирĕн Сойус ÇКИ-ҫе ҫаплă вырăн йышăнса тăраĭ, ман шухăшпа, пирĕн Сойусăн ÇКИ çинҫен лайăх вĕренсе пĕлме тăрăшас пулаĭ. Ăна вăй парас пулаĭ, ун йенне хытăрах пăхас пулаĭ.

Тĕрлĕрен ҫĕлхесене ытларах вĕренес пулаĭ. В И. хăйĕн ĕç нумай пулин те, 1922 мĕш çулта çамрăксем хушшинҫе ĕçлекен йулташсене нимĕҫ, хрансус, акăлҫан ҫĕлхисене вĕрентмелле,—тесе политпӳрора йури калаçтарма та вăхăт тупнă. Политпӳрора Керсон çинҫен каласса ĕçе пĕтерне хыççăн, В. И. хушнипе, РÇЛКС нҫи çав йулташсене йуг ҫĕлхесемпе калаçма вĕрентмелле тесе, кайран пĕр çур çул иртсен, вĕреннипе вĕренеймении çинҫен парттин Тĕпкомне токлат тутармалла, тесе сăмах татнă. Пирĕн Ленинкратри пек орканисатсирен пĕр ик теçеткă çамрăксене суйласа пĕтем тĕнҫери çамрăксен орканисатсине пулăшма хатĕрлесен пĕртте çылăх пулмĕҫҫĕ. Ҫăнах та мĕншĕн хатĕрлес мар. Мĕншĕн ҫарăнса тăмалла пирĕн çак кирлĕ ĕç умĕнҫе?

Çак орканисатси малашне пит паллă вырăн йышăнассине епĕр пĕлсех тăратпăр. Халĕ вăхăтлăха, унăн

ĕçĕ пит йерипен пыраť, çапах та, истори пына майĕпе каласассăн, пĕтĕм тĕнђипе пулас револютси сăмса айĕнђех. Пирĕн сойус çак ĕç çине питех пăхман, халĕ хытăрах пăхас пулаť. Çапла ĕнтĕ, йулташсем, пасăр каланисене пурне те пĕрлештерсе, епĕ сире ака мĕне астутарасшăн: *Сирĕн сыпăк, комунисăм пурнăçне тăвакансен тĕп сыпăкĕ, сирĕнтен кашниех РÇЛКС ђленĕ анђах мар, çав вăхăтрах Çамрăксен Комунисла Интернатсионалăн, ђапла, аслă оркан исатсин, малашнехи пурнăç хуçин ђленĕ пулаť.*

## Çĕнĕ çын йепле пулмалла.

Епĕ сирĕн умра тăракан ĕçсене каласа патăм. Халĕ ĕнтĕ епĕ Перлинре (Нимĕçсен тĕп хули) тухакан „Вырăс шухăшĕ“ (Русская мысль) йатлă шурнална çапнă пĕр статйан паллă тĕлĕсене вуласа кăтартам. Вăл шурнала пĕр Струве йатлă нумай вĕреннĕ пуршуй кăлараť. Совет Рaççейĕнђе 4 çул хушши сăнаса пурăннă çын „Раççейри револютсипе интеликенси çине мĕнле пăхмалла“ йатлă статйара ака мĕн çыраť:

Нумай вĕреннĕ вырăссем нуштапа хуйхăлă пурнăçра,—хăйсене хĕсĕрленĕрен шикленсе пурăннă майĕпе хăйсем ĕлĕк мĕнле иртĕхсе, кахалланса, хăйсене хăйсем асла хурса, ыттисене хĕсĕрлесе пурăннине хăйсемех курђĕç. Пĕр пĕр тĕксĕм çутăллă пÿлĕмре мĕн те пулин çикелесе ларнă ђухне, тĕлĕнмелли сăмахсем ђас ђасах илтмелле пулаť: мĕншĕн епĕр ĕлĕк пит скуђнă пурăннăши. Халĕ пуш вăхăт пулсассăн, епĕр ун пек пурăнас çук... Йе тата: мĕншĕн епĕ ĕлĕк хама хам

йаланах имлесе пурăннăши... теççĕ. Унтан тата: урай шăлассн, ҫашăк тирĕке çăвасси çăмăлах мар; çав ĕç-сене тунă хыççăн прислукă ывăнаӗ те пулĕ тесе епĕ ĕлĕк шухăшламан та, теççĕ. Ҫас ҫасах тата акă мĕнле калаçнине илтнĕ. „Швейтсар хăйĕн 5 аҫипе тĕттĕм, нӳрĕ путвалра пурăнма пултарайас çуккине ĕлĕк мĕнле аса илеймен епĕр", теççĕ, тет.

Йут патшалăхсенҫи вырăс интеликенҫĕсем Раççейăн хаҫхипе малашнехи пурнăçĕ çине мĕнле пăхнине, тата вĕсем çав йапала çине пăхас тĕлĕшрен Совет Раççейĕнҫи интеликентсенҫен мĕнле ăрасналанса тăнине уйрăм уççипе пĕлес тесен, акă мĕн каламалла: йут патшалăхсенҫе тухакан тĕрлĕрен хаçат-шурналсем тăрăх каласан, унти интеликентсен шухăшĕпе, Раççейре пулса пыракан ĕçсем вĕсем пĕринпе пĕри сыпăнса пымасçĕ, кĕтмен çĕртен сасартăк сиксе тухаççĕ, тата тунă ĕçĕсем ĕмĕрлĕхе йулмаççĕ пулаӗ вара, вĕсем пур те ĕлĕк те халĕ те йут ирĕкпе, кăтартупа пулса пыраççĕ пулаӗ иккен, çитменнине тата вĕсене тӳрлетес тесен пур те хатĕр, тата ĕлĕкхи кивĕ йеркесемпе те тӳрлетме пулаӗ иккен. Кун пек айван сăмахсене никам та каламĕ, анҫах çапах та унти хаçатсене вуласан, вĕсем пирĕн Раççейри ĕçсем çине çаплах пăхаççĕ тесе каласах пулаӗ.

Малалла çав автăрах акă мĕн çыраӗ: Поҫшевисăм йăтăнса ансан, каллех ĕлĕкхи пек лайăх пурăнма пулаӗ, вăл пуласси сисĕнет, ăна ĕмĕтленсех тăрас пулаӗ, тет. Вĕсен ĕмĕҫĕ тăрăх поҫшевисăм ҫасах йăтăнса анаӗ те, вĕсем вара хăйсен пурнăçне ĕлĕкхи кивĕ

йӗркен никӗсӗ ҫинҫе ӑнтараҫҫӗ, анҫах пӗтӗмпех кивӗ ҫулпа йамаҫҫӗ, хӑйсем те тепӗр хут ҫураласҫӗ—улшӑнаҫҫӗ иккен.

Малалла Струве акӑ мӗн ҫырать: «Совет Раҫҫейӗнҫи интеликентсем шухӑшласа тӑвакан сынна—малашне пулас вырӑс краштанне—уйрӑм уҫҫипе кӑтартса парас ӗҫе, ҫӑмӑлах мар ӗҫе хам ҫине илсе, епӗ ун ҫинҫен акӑ мӗн калас тетӗп: Вӑл; ӗҫе пуҫлама йуратакан, вӑйлӑ ҫын, характӗрлӑ ҫын, пурнӑҫ шухӑшӗпе ҫеҫ пурнать, унтан тата хӑйне хӑй аслӑрах тытать теме те йурать ӑна, анҫах вӑл ҫапах ӗҫе йуратакан, таса ҫӗреллӗ ҫын, хӑйӗн тивӗҫне пӗлекен ҫын, ҫавӑнпа ытти хӑй майлӑ ҫынсемпе те ырӑ кӑмӑллӑ пулма пӗлекен ҫын пулӗ.

Унӑн хӑйне тивӗҫ йапала пулни (йе ҫав йапалана тупма май пурри) тата ирӗклӗ ӗҫ—ӑна хӑйӗн йе йутӑн йапалисене аван пӑхса усрама, хӗрхенме вӗрентӗ, унтан вара майӗпе вӑл кулҫтурӑн тӗрлӗрен хаклӑ йапалисене те ырӑ сунса, вӗсене сыхласа тӑма вӗренӗ. Вӑл ӗлӗкхипе хӑй йӑхӑтӗнҫи пурнӑҫа уйрӑм уҫҫипе пӗлекен, ӗҫе йуратакан ҫын пулӗ, анҫах вӑл нихӑш вӑхӑт ҫине те ҫалӑш куҫпа пӑхмӗ, вӑл пур йапала ҫинҫен те пӗлесшӗн пулӗ, мӗншӗн тесен, ӑна хуҫте мӗнле ӗҫре пуҫӑнма та ирӗк пулӗ, ҫавӑн пирки вара унӑн кӑмӑлне килни пур те пулса пырӗ. Вӑл хайӗнҫен малтан пулса иртнӗ вӑхӑҫӑн асапӗсене (каласа кӑтаргнӑ тӑрӑх та пулин) лайӑх астуса тӑрӗ. Вӑл пуринпе те пӗр пек пулӗ, пурнӑҫа лайӑх пӗлсе тӑрӗ, вӑл ӑна хакла хурса ӑна ырӑ сунӗ. Вӑл пӗр пӗр йапала ҫинҫен ӑнланас пулсан та, пӗр пӗр сӑмах калас пулсан та,

тӳрех персе йамӗ, мӗнпӗн тесен, сӑмах та ђӗрӗ вӑй хӑш ђухне тискер вӑй. Вӑл ӑна пӗлсе тӑрӗ».

Пӗр йенђен вӗсем ђылай вӗренђӗҫ; револютси вӗсене нумай йапаласем ҫинђен шухӑшлаттарать; тепӗр йенђен вӗсем хӑйсен шухӑшӗсем ыран пайанах саланса кайасса кӗгеҫҫӗ. Польшевиксен револютсин хуранӗнђе пиҫнӗ интелекентсен аҷисем мӗнле пулмаллаха вӗсен шухӑшӗпе. Вӗсем „таса ђӗреллӗ ҫынсем, ӗҫе йуратакан ҫынсем, пӑртак тата мӑн кӑмӑллӑрах та“ пулмалла иккен. Етемӗн мӗнле пулмалли ҫинђен пирӗн те шухӑша кайас пулать, Струве пуршуйӑн сӑмахӗсене епӗ сире ҫавӑнпа вуласа патӑм. Мӗнле пулмаллаши пирӗн, польшевиксен револютси виттӗр тухнӑ револютсионерсен? Ҫав пуршуй хӑйӗн статйинђе ҫырса кӑтартакан вӑхӑт нихҫан та пулас ҫуккине епӗр пӗлсех тӑрагпӑр. Вӗсем хӑйсене хӑйсем хутте мӗн каласа лӑплантарђӑр.

Анђах ҫапах та пролеттари интеликенсинђен тухнӑ ҫӗнӗ ҫынӑн йе урӑхла каласан, интеликентлӑ пролеттарин мӗнле пулмалли ҫинђен шухӑшласа пӑхни йурать. Ҫӗнӗ ҫын вӑл—ӗҫе пуҫласа йама йуратаканскер хастар ҫын, вӑл тӗрлӗрен йумахсене ӗненмест, хитре, илемлӗ сӑмахсем хушшинђе ҫӳремест. Мӗн хӑвитлине, мӗн ђаплине пурне те Маркспа Ленин вӗрентнисенђен илес пулать, унӑн ҫутҫанталӑка сӑнакан ђаплӑ, аслӑ ҫынсенђен вӗренес пулать, ӗҫлӗхлӗ пулас пулать. Кусем—унӑн тӗп тивӗҫлӗхӗсем пулаҫҫӗ. Унӑн кахаллӑха, ним ӗҫ тума аптӑраса пурнас йӗркене, пӗр ҫын теприне ырӑ сунман йӗркене ӗмӗрлӗхе пӗтерес пулать, унӑн ӑслӑ, ҫивӗђ ҫын, ӗҫлеме пултаракан, тӑрӑшса ӗҫлекен

çын пулас пулаҫ̆. Америкри пурнăçăн лайăх йенне илсе вырăс халăхĕн лайăхлăхĕсемпе пĕрлештерес пулаҫ̆. Сирĕн сыпăк аслă çул çине, ĕлĕк пўлсе лартнисенҫ̆ен тасалнă çул çине тухĕ. Çĕнĕ сыпăкăн хăйĕнҫ̆ен маларах пурăнса иртернĕ сыпăкран акă мĕнле паллăсемпе уйăрăлса тăмалла: унăн малашне мĕн пуласса инçетренех курмалла, унăн паттăр, çирĕп пулмалла, çак паллăсем авалхи Раççейре пулма пултарайман пулсан. Вĕсем ĕçхалăхĕн çĕнĕ патшалăхĕнҫ̆е—ĕç халăхĕн Сойусĕнҫ̆е тĕп паллăсем пулмалла.

Хаҫ̆хи саманара хăйсене хăйсем „Ленин аҫ̆исем" тесе калакансем Раççейре те, ытти çĕрсенҫ̆е те нумай. РÇЛКС-ăн хăй Ленин Сойусĕ пулнипе—Влатимир Илйиҫ̆е асăнса, унăн ҫ̆аплă ĕçĕсем умĕнҫ̆е пусне тайнипе çеç кăтартас пулмасҫ̆, унăн ăшĕ те, ҫ̆ĕри те пĕтĕмпех Ленинлă, поҫ̆шевиклă пулас пулаҫ̆, унăн РКП-не, Коминтерна, тата Совет патшалăхне тунă ĕçлекенсемпе пĕрле ĕçлекен органисатси пулас пулаҫ̆, çак çĕнĕ сыпăкăн хутте хăçан та тĕп сыпăкпа пĕрлешсе ĕçлес пулаҫ̆. Ленинăн ватă квартин ҫ̆апĕпе мухтавĕсене çамрăк сыпăкăн ҫ̆аплă мухтавлă ĕçĕсемпе пĕрлештерес пулаҫ̆. Çамрăксен Комсойусĕн комунисăмшăн çапăçакан, сетемлĕхĕн малта пыракан отреҫ̆ĕ пулмалла, Ленин Сойусĕ тесе çав шухăшпа калас пулаҫ̆ ăна. *Раççей Комуниссен парттин ҫ̆ленĕ йатĕнҫ̆ен ҫ̆аплă йат сирĕншĕн урăх пулмалла мар; есĕр хăвăра хăвăр та, ыттисене те çапла вĕрентĕр.*

## Комсомолĕс ваљљи хăшхăш правĕлсем.

Епĕр аллă çулти стариксем, епĕр çулсене тасатрăмăр, епĕр пит пысăк ĕçсем турăмăр, анђах комунисăм ырăлăхĕсене епĕр пĕтĕмпех курайас çук, сирĕн сыпăк вĕсене куратех, çавăнпа та сирĕн çинђе пит пысăк ĕçсем пулма кирлĕ; нимĕнрен ытла сирĕн ђăн комуниссем пулма тăрăшас пулаť.—çапла каланă Ленин йулташ.

Унтан тата хăвăнтан аслă ĕçлекенсен сыпăкĕн—сана çул уçса панă ăрăвăн ђапла ĕçĕсене ан ман. Çав револютсинех тăвакансен йăхне маннинђен усал йапала урăх нимĕн те çук. Халĕ хĕрлĕ йалавăн çугинђе çуралнă çамрăксем, пирĕн хĕрлĕ йалавсене йăтса, утса çӳрес йăласене хăнăхса çитнĕскерсем пур, ку йăла вĕсемшĕн тĕлĕнмелли йапала мар. Йулташсем, револютсишĕн асапланса вилнĕ çынсем, паттăрсем çинђен лайăх вĕренсе çитĕ, каттăркăсенђи, тĕрмесенђи пурнăçсем çинђен нумайрах вулăр, вĕсем .çинђен ытти çамрăксене те вĕрентĕр, тĕрмере, каттăркăра ерчи ернипе выçă курса ларасси мĕнлине вĕсем те пĕлђđĕр. Халĕ пире хĕрлĕ Пинккертон кирлĕ теççĕ. Епĕ ăна хирĕç мар. Мĕншĕн вулас мар хĕрлĕ Пинккертон çинђен, йерçӳ пулсан, ăнланмалла çырнă пулсан. Анђах ђи малтан револютсишĕн вуншар çул çапăçса хăрушă вăхăтсенђе ĕмĕрĕсене иртернĕ çынсен пурăнăçĕсене тĕплĕ вĕренсе пĕлмелле. Есĕр вĕсем çинђен сахал вĕренетĕр. Орловски ђентрал, Серентуй каттăрки, Шлиссельпурск, тата Петропавловск çинђен çамрăксем пĕлмеççĕ,

вĕсем пур те çывăхрах. Ĕçлекенсем поçшевиксем пĕçĕк крушок тăвас тесе çулĕ çулĕпе ĕçлеме пĕлнĕ, каттăркă асапĕсене вуншар çул çăтса иртернĕ, çав ĕçлекенсен йаçĕсене сирĕн *пĕлес пулат*.

Ĕçлесе вĕрен, тата вĕренсе ĕçле. Ку—виççĕмĕш.

Нумайрах вĕренес, сотсиалисăмлă хуçайствăна вăйлăлатма пулăшас пирки епĕ пайан мĕн турăмши тесе, хăвăнтан ху кашни кун ыйт. Ку тăватăмĕш пулçĕ.

Хăвăн хуг пĕлес пулаť. Хут пĕлменлĕхе, тĕнĕн тĕшмĕшĕсене санăн хăвăн çи кураймая тăшман тăвас пулаť. Хут пĕлменлĕхе санăн мăйĕвçен пăвсах пĕтерсе хурас пулаť, çав усал çине купи купипе тийенсе ăна ишсе пăрахас пулаť. Ку сирĕн пиллĕкĕмĕш правĕлă.

Есĕ—çапăçакан пролетгарин паттăр çарĕн рекруçĕ. Ўссе çитсессĕн есĕ РКП-не те, Коминтерна та кĕрĕн. Çавна санăн астусах тăмалла. Санăн çав партийе, тата пĕтĕм тĕнçери пролетгари оркаписатсине хăвăнтан малтанхи сыпăк пек мар, куçтурлăрах пулса; ытларах вĕренсе кĕмелле. Ку ултăмĕш правĕлă.

Хĕрлĕ Çарпа хлога çунтан çĕререн йуратса, уншăн хутте хăçан та вилме хатĕр пулас пулаť. Ку çиçĕмĕш правĕлă.

Хулапа йал хушшинçи пĕрлешуре есĕ çи çирĕп çыхă. Ку санăн саккăрмĕш астумалли.

Иртĕхсе, ахăрса, кахалланса вăхăта иртерес йăлана хирĕç пул. Ку тăххăрмĕш правĕл.

Хăна ху та ытттисене те тисçиплинăна пăхăнтар; хутте хăçан та çине тăрса ĕçле çивĕç пул, хăвăн пролетгари çамрăкăн çивĕçлĕхне, паттăрлăхна кăтарт, (ан-

ҫах пӗр ӗҫе сасартӑк пырса тӑрӑнса, ӑна тӑваймасӑр теприн патне пӑрахса тарса мар), ҫӑн ҫивӗҫ, ҫӑн паттӑр пул. Ӗҫе тытӑнтӑн пулсан, ӑна пӗтермесӗр ан пӑрах. Ку вунӑмӗш.

Кунта икӗ пурнӑҫ курӑнать. Пӗр йенҫе ӗлӗкхи кивӗ Раҫҫей, рехвормаҫҫенхи Раҫҫей. Тепӗр йенҫе ӗҫхалӑхӗн ҫӗнӗ, ҫирӗп Сойусӗ—пӗрлешӳвӗ. Кивӗ Раҫҫей ӑшӗнҫе кахалпа йӗркесӗрлӗх анҫах пулнӑ. Ҫӗнӗ Раҫҫейӗн, Ленинӑн ҫамрӑк комуниссен Канаш респуплӗкӗн, ҫӗнӗ патшалӑхӑн, вӑйлӑ паттӑр, ҫивӗҫ халӑх пулмалла. В. И. ҫамрӑксен умӗнҫе акӑ мӗн тенӗ: *сирӗн хӑвӑр ӗҫӗрсемпе патшалӑхри мӗн пур халӑх умӗнтҫе ырӑ йатлӑ пулас пулать,* текӗ. Ҫак сӑмахсене вӑл пит вырӑнлӑ калапӑ. Сирӗн кашни хут пӗлмен хӗрарӑмран—хӗртсурта ӗненекен, комсомолӗссене аскӑнҫӑксем тесе калакан хӗрарӑмран—ырӑ сӑмах илтмелле ӗҫлес пулать, вӗсене хӑвӑр ҫине ҫӑнах та ӑшшӑн пӑхтармалла ӗҫлес пулать. Есӗр ӗҫлекенсен класӗнҫи паттӑр ушкӑнӗ пулмалла. Сирӗн алхасмалла та, ахӑрмалла кӑна мар, *ӗҫлесе вӗренмелле, тата вӗренсе ӗҫлемелле.*

Ҫи малтанхи пролеттарилле revoҫутси краштӑн вӑрҫиҫе, выҫлӑх ҫулсенҫе пит нумай хӗн хур ҫӑтса иртерҫӗ. Пирӗн ҫамрӑксен сойусӗ ҫав йӑвӑр пурнӑҫра ӳснӗ. Пире ҫавӑн пек асапсенҫе пиҫнӗ сойус кирлӗ. Атӑр, йулташсем, пӗҫӗк ӗҫрен пуҫласа та пулин. В. И. пек пулма тӑрӑшар, вара сирӗн сойус Ленин Сойусӗ йатлӑ пулма ҫӑвах та тивӗҫлӗ пулӗ.